ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Июль
3
ЭРНЕКУН
№ 128 (9037)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Миршĕн кĕрешес ĕçре халăхсен сыхăлăхне тата ытларах вăйлатар! Рабочисемпе служащисен Шупашкарта тата районсенче пулса иртнĕ пухăвĕсенчен (2 стр.).
В. Дмитриев.—Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен рольне ÿстерессишĕн (2 стр.).
Утă çулас, силос хывас ĕçе васкатар, вăйлă ÿсекен тырпула хăвăрт, тăккаламасăр пухса кĕртме хатĕр пулар! (3 стр.).
Миршĕн кĕрешес ĕçре хĕрарăмсем пысăк вăй (3 стр.).
Л. Семенова.—Пахча çимĕçсене сиен кÿрекен хурт-кăпшанкăсене пĕтерер (3 стр.).
«Çамрăк ăрăвăн телейлĕ пурнăç правине кĕрешсе илмелле». Демократиллĕ çамрăксен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретариачĕ пĕлтерни (4 стр.).
Китайри Коммунистсен партийĕн йышĕ ÿссе пырать (4 стр.).
И. В. Сталин Сочиненийĕсене Китай чĕлхипе пичетлесе кăларассĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕçсынни-сем правительство решенийĕсене ырлассĕ. (4 стр.).

Марксизм-ленинизмăн творчествăлла вăйĕ

Коммунистсен партийĕн вăйĕпе никам çĕнтерейменлĕхĕ вăл хăйĕн ĕçĕсене Маркс-ăн—Энгельсăн — Ленинăн — Сталинăн революциллĕ аслă вĕрентĕвне тĕп вырăна хурса туса пынинче пулать. Марксизм-ленинизм пирĕн партие общество аталанăвĕн законĕсене пĕлнипе, йĕритавралăха тĕрĕс ăнланса илме пĕлнипе хĕçпăшаллантарать, событисен аталанăвне малтанах курса тăма тата тĕрĕс политика палăртма май парать.

Марксизм-ленинизм теорийĕ рабочи класăн обществăна революциллĕ урăхлатса çĕнетессишĕн, халăхсен çутă малăшлăхĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре рабочи класс партийĕн хăватлă идейăлла хĕçпăшалĕ пулать. Марксизм-ленинизмăн пурнăçри вăйне пĕтĕм тĕнчери рабочи класс движенийĕн опычĕпе, Октябрьти Аслă революци опычĕпе, ССР Союзĕнчи социализмăн пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе, халăх демократи çĕршывĕсенче çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçри çитĕнÿсемпе кăтартса панă.

Марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕ пурне те çĕнтерсе пырать, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс вĕрентÿ. Вăл обществăн материальнăй пурнăç аталанăвĕн потребноçĕсене, рабочи класпа мĕнпур ĕçсыннисен тĕп интересĕсене тĕрĕс палăртса тăрать. Марксизм-ленинизм—тăтăшах малалла аталанса пыракан вĕрентÿ, пурнăçра çĕнĕрен çуралнисене пĕтĕмпех тата революциллĕ практика опытне пĕтĕçтерекен теори.

Теорипе практика уйрăлми тачă çыхăнса тăни марксистла-ленинла партии ĕçĕсенчи чи пысăк паллă пулать. В. И. Ленин пирĕн партие—революциллĕ кĕрешÿ партине туса хунă, унăн кадрĕсене творчествăлла марксизм майлă тата революциллĕ теорие пăснисене хирĕç кĕрешме воспитани панă. Ленинизм вăл—империализм тата пролетарилле революцисем тапхăрĕнчи марксизм Ленин ĕçĕсене малалла туса пынă И. В. Сталин, историллĕ çĕнĕ условисене шута илсе, марксизм-ленинизм теорине малалла аталантарнă. Унăн произведенийĕсенче совет çыннисемпе мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисем хальхи вăхăтра миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешнĕ чухне чи кирлĕ ыйтусем çине ответсем тупаççĕ.

Коммунистсен партийĕ хăйĕн идейăлла пуянлăхне чыслăн сыхласа усрать, марксизм-ленинизм идейисене малалла творчествăлла аталантарассишĕн тата вĕсене пурнăçласшишĕн пĕр пăркаланмасăр тата çине тăрса кĕрешет.

Революциллĕ теорипе хĕçпăшалланнă, рабочи класпа мĕнпур ĕçсыннисен интересĕсемшĕн çур ĕмĕр хушши кĕрешнин опычĕпе пуянланнă партии ĕçсене ăсталла илсе пымаллине пĕлет тата ĕçсене ăнăçлăн туса пырать. Коммунистсен партийĕн политикине пĕтĕм совет халăхĕ пĕтĕмĕшпех ырласа йышăнать тата пурнăçа кĕртме тăрăшать. Çак политика тĕрĕссине çĕнĕ пурнăç тăвассишĕн вуншар çулсем хушши кĕрешсе кăтартса панă. Пирĕн парти вăйĕ—вăл анлă массăсемпе питĕ тачă çыхăнса тăнинче тата вăл чăннипех те халăх партийĕ пулнинче. Партипе халăх пĕрлĕхĕн никĕсĕ коммунистсем халăх интересĕсемшĕн çирĕппĕн тăрăшни пулать. Парти речĕсем хурçă пек пĕрлĕхлĕ тата пĕтĕçÿллĕ пули—парти вăйĕпе хăвачĕн тĕп условийĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенче хуçалăхпа культура строительствин питех те пысăк программине, социализмран коммунизм патне майĕпен куçса пымалли вăхăтра парти умĕнче тăракан тĕп задачăсене кăтартса панă. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пирĕн социализмла Тăван çĕршыва малалла аталантарса вăйлатассишĕн çине тăрса кĕрешет. Партипе правительство социализмла промышленноçа, пирĕн çĕршыв вăй-хăвачĕн тĕрекне, пур майсемпе те аталантараççĕ, колхоз стройне тăтăшах тĕреклетеççĕ, мĕнпур колхозсене малалла тĕреклетсе аталантармалла тăваççĕ.

Шалти политика тĕлĕшпе партин тĕп ĕçĕ пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатасси, унăн культурăлла шайне ÿстересси пулать. Совет çыннине ырлăх кÿресси, совет халăхĕшĕн тăрăшасси пирĕн партишĕн чи аслă закон пулса тăрать. Рабочи класпа колхоз хресченĕсен Союзне, ССР Союзĕнчи халăхсен пĕрлĕхĕпе туслăхне тĕреклетес тата Совет государствин вăй-хăватне пур майсемпе те ÿстерес ĕçсене парти пысăк вырăна хурса хаклать. Тулашри политика тĕлĕшпе партипе правительство мире сыхласа хăварса тĕреклетес политика, çĕнĕ вăрçă чĕртсе ярассине хирĕç кĕрешес политика, пĕтĕм тĕнчери çĕршывсемпе мирлĕ килĕштерсе ĕçлес тата мĕнпур çĕршывсемпе ĕçлĕ çыхăнусем тытассине вăйлатас политика тытса пырать. Мирĕн, демократипе социализмăн хăватлă лагерьне тĕреклетессине, демократи лагерĕнчи çĕршывсенчи халăхсен туслăхĕпе пĕрлĕхне тĕреклетессине парти хăйĕн чи кирлĕ задачи тесе шутлать.

Коммунизм строительствин историллĕ задачисене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре парти пирĕн кадрсене идейăпа теори тĕлĕшĕнчен хатĕрлесси çине, ĕçсыннисене коммунизмла воспитани парасси çине питĕ тимлĕ пăхать. Пирĕн кадрсем, революциллĕ теорипе хĕçпăшалланса, экономикăлла законсене пĕлсе çитсе, хуçалăхпа культура строительствин ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пама, социализмла стройăн паха енĕсемпе халăх интересĕсемшĕн лайăххăн усă курма вĕренеççĕ.

Социализмла промышленноçпа ялхуçалăхне малалла вăйлатас тĕлĕшпе тăракан задачăсем кадрсене политикăлла экономие, производство техникипе экономикине тĕплĕн пĕлме хушаççĕ. Пирĕн кадрсем хăйсен пĕлĕвĕсемпе творчествăлла усă курма, теорипе практикăна ăста çыхăнтарса пыма, коммунизм строительствинче тухса тăнă çĕнĕ ыйтусене тĕрĕс татса пама тивĕç.

Пирĕн кадрсем, интеллигенци, коммунистсем марксизм-ленинизм теорине тĕплĕн вĕренсе пĕлни, унпа ĕçре творчествăлла усă курни—пĕтĕм идеологилле ĕçе вăйлатмалли питех те паха услови. Идеологилле ĕç партин чи пĕрремĕш обязанноçĕ пулать. Марксизм-ленинизма пропагандăлас ĕçе анлăн сарса пырса, парти догматизма тата начетничествăна хирĕç татăклăн кĕрешет. Практика çакна кăтартса парать: теорие пĕрре вĕренсе хунă формулăсемпе нихçан та улшăнман догмăсем пек хаклакан çынсем, пурнăç теорипе практикăра усă курма хушнă чухне, аптраса ÿкеççĕ. Кадрсене хатĕрлесе воспитани парас ĕçре теорие творчествăлла хаклани тĕп вырăнта пулмалла тесе тăрăшать парти. Пирĕн кадрсене творчествăлла марксизм майлă, идеологилле пăсăклăхсемпе, вĕсем кирек мĕнле палăрсан та, ним килĕшмелле мар пулма воспитани парасси—хуçалăхпа культура строительствине ăнăçлăн ертсе пымалли никĕс.

Марксизм-ленинизм — пирĕн çĕршывра пуç пулса тăракан идеологи. Вăл массăсене коммунистла воспитани памалли никĕс пулать. Парти ĕçсыннисене коммунизмăн аслă идейисемпе, совет патриотизмĕпе интернационализм майлă пулма воспитани парать, массăсене общество умĕнчи тивĕçе тарăнăн туйса тăма, ĕçпе обществăлла харпăрлăх çине коммунистла пăхма вĕрентет. Ĕçсыннисен анлă массисем хушшинче парти политикăлла сыхăлăха вăйлатса пырать, шалтипе тулашри тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ чухне çирĕп пулма вĕрентет. Массăсен социализмла ăнланулăхĕ ÿсни вĕсен ĕçпе политикăлла активлăхне ÿстерет, совет обществин вăйĕсене тĕреклетет. Идеологилле мĕнпур майсене—пропагандăпа агитацие, пичетпе радиона—парти массăсене коммунизмла воспитани парас задачăна пăхăнтарать.

Марксизм-ленинизм теорине пропагандăлас ĕçре пирĕн пичет пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Вăл массăсем хушшинче марксизм-ленинизм идейисене сарма, партипе правительство политикине пропагандăлама, çав политикăна пурнăçлас ĕçе пулăшма тивĕç. Марксизм-ленинизм теорине хаçат-журналсенче пропагандăлас хисеплĕ ĕçе вăйлатасси, çав ĕçе коммунизм строительствин задачисемпе тачă çыхăнтарса, витĕмлĕ те уçăмлăн, творчествăлла марксизм хушнă пек туса пырасси—пичет работникĕсен тивĕçĕ.

Парти совет наукине малалла творчествăллăн аталантарассишĕн кĕрешет. Партин XIX-мĕш съездĕнче пирĕн наукăна çулĕрех пусăма çĕклеме кирли çинчен, наука ĕçĕнче критикăпа шухăшсен кĕрешĕвне вăйлатма кирли çинчен асăрхаттарса хăварнă, мĕншĕн тесен совет науки çапла майпа кăна хăйĕн тивĕçне пурнăçлама—тĕнчери наукăра пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарать. Пирĕн наукăри кадрсем хăйсен творчествăлла вăйне халăх хуçалăхĕшĕн пысăк вырăн йышăнса тăракан научнăй проблемăсене татса парас ĕçе параççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, марксистла-ленинла вĕрентÿпе хĕçпăшалланнăскер, совет халăхне малалла, пирĕн çĕршыври коммунизм çĕнтерĕвĕ патне шанчăклăн ертсе пырать.

(«ПРАВДА» хаçатăн июлĕн 2-мĕшĕнчи умстатьи).

Планран ирттерсе тултарнă

Шупашкарти пир-авăр фабрики коллективĕ ĕçсыннисем валли пир-авăр ытларах туса кăларассишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, чĕртавăр перекетлессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешет.

Коллективăн ĕçри хастарлăхĕ вăйланса пынипе пула фабрика продукци туса кăлармалли иккĕмĕш кварталти плана пĕтĕмпе июнĕн 27-мĕшĕ тĕлне 103,2 процент тултарчĕ. Çип арламалли, катан пир тĕртмелли плана та срокчен тултарнă, ĕç тухăçлăхне ÿстермелли, продукци пахалăхне лайăхлатмалли задание те чыслăн пурнăçланă.

Май уйăхĕнче фабрика продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетсе 400 пин тенке яхăн перекетлерĕ.

Г. КУЛЕШОВ,
фабрика директорĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Парти кадрĕсен вĕренĕвĕ

ВЛАДИВОСТОК. КПСС Приморье крайкомĕ çумĕнче пропагандистсен уйăхлăх курсĕ ĕçлеме тытăннă. Крайри хуласемпе районсенчен кружоксен руководителĕсем, касхи партшкулсенче вĕрентекен преподавательсем, пропагандистсен семинарĕсен руководителĕсем 600 çын ытла пухăннă. Лекцисем вулама тата семинар занятийĕсене ирттерме крайри парти шкулĕнчи, аслă шкулсенчи кафедрăсен заведующийĕсемпе аслă преподавательсене, ертсе пыракан парти работникĕсене тата КПСС крайкомĕн лекторĕсене хутшăнтарнă.

ЧКАЛОВ. Кунта парти историне аслăрах кружоксенче вĕрентекен пропагандистсен, диалектикăлла тата историлле материализма вĕрентекен кружоксене, семинарсене ертсе пыракансен, касхи партшкулсенче вĕрентекен преподавательсен уйăхлăх курсĕ ĕçлеме пуçланă. Курсра пĕтĕмпе 610 çын вĕренет.

РИГА. Латвири Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн Центральнăй Комитечĕ çумĕнче комсомол вĕренĕвне ертсе пыракан пропагандистсен уйăхлăх курсĕ ĕçлеме пуçланă.

Малтанхи занятире пропагандистсем «Коммунистсен партийĕн политики—совет стройĕн пурнăçлă никĕсĕ», «Халăх ырлăхĕшĕн тăрăшасси—партин чи аслă законĕ» темăсем тăрăх лекцисем итленĕ.

Заочно вĕренекенсен экзаменĕ

Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан Государство университетĕнче июлĕн 1-мĕшĕнче заочно вĕренекен студентсен çуллахи экзамен сессийĕ пуçланнă. Сессие педагогсем, инженерсемпе техниксем, рабочисем 3.500 çын ытла хутшăнаççĕ. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен пухăннă заочниксем 9 факультетра обществăлла дисциплинăпа специальнăй дисциплина тăрăх лекцисем итлеççĕ, лабораторисемпе кабинетсенче ĕçлеççĕ, профессорсемпе доцентсем патĕнче консультацисенче пулаççĕ.

Университетăн заочнăй уйрăмне вĕренме кĕрекенсен экзаменĕ вĕçленсе пырать. Кăçал университет заочнăй уйрăмсенче вĕренме çĕнĕрен 1.000 студент илет. Вĕсем ĕçрен уйрăлмасăр вĕренеççĕ.

Ытти аслă шкулсенче те вĕренме кăçал иртнĕ çулхинчен нумайрах илеççĕ. Пĕтĕм Союзри заочнăй политехника институчĕ пĕрремĕш курса вĕренме 4.600 студент, Пĕтĕм Союзри заочнăй энергетика институчĕ 3.500 студент, Пĕтĕм Союзри заочнăй финансовăй институт 4.000 студента яхăн вĕренме илет.

Мускаври заочнăй аслă шкулсемпе институтсен заочнăй уйрăмĕсене пĕтĕмпе 40.000 çынна яхăн вĕренме илмелле.

(ТАСС).



Куйбышев хули. В. В. Куйбышев ячĕпе тăракан площадь.
С. КРОПИВНИЦКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнă тĕле

ЧУСОВОЙ (Молотов облаçĕ), июнĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнă ятпа Пушкин ячĕпе тăракан библиотекăра поэт произведенийĕсен выставкине организациленĕ. Халĕ вулакансен конференцийĕ ирттерме хатĕрленеççĕ.

Хулари ĕçсыннисем В. В. Маяковский творчествипе тата пурнăçĕпе питĕ интересленеççĕ. Çак кунсенче ĕçсыннисем библиотекăсенчен поэт кĕнекисене нумай илсе вулаççĕ.

* * *

МАГАДАН, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Колыма тăрăхĕнчи ялсенче В. В. Маяковский çуралнăранпа 60 çул тултарнине хатĕрленес ĕç анлăн сарăлнă. Предприятисемпе учреждениссенче литература касĕсем, вулакансен конференцийĕсем, докладсем ирттереççĕ.

Нексикан поселокĕнче литература касĕ пулса иртнĕ. Унта поэтăн пурнăçĕпе литература ĕçĕсем çинчен доклад итленĕ. Художествăллă пултарулăх кружокĕнче тăракансем В. В. Маяковский произведенийĕсене вуласа панă. Кунтах литература выставки организациленĕ.

Сусуман поселокĕнчи предприятисенче В. В. Маяковский творчестви çинчен лекцисем ирттерме тытăннă.

Мингечаур гидроузелĕн строительствинче

МИНГЕЧАУР (Азербайджан ССР), июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Мингечаур гидроузелне тăвакансем тăрăшса ĕçлеççĕ. Пĕве куллен-кун çĕкленсе пырать. Самух айлăмĕнче Мингечаур тинĕсĕ çĕршер тăваткал километр анлăшне сарăлса выртать.

Строительсем комплекслă график тăрăх ĕçлеççĕ. Çĕнĕ меслетпе ĕçлесе, вĕсем куллен 20 пин кубометр ытла хăйăр тата чул купалаççĕ. Волков юлташ сменинче ĕçлекен гидромониторщиксем кашни виççĕмĕш кубометр тăпрана планран ирттерсе кăлараççĕ.

Çамрăк Мингечаур хули ÿссе çитĕнет. Июль уйăхĕнче строительсем валли нумай хутлă тăватă çурт туса пĕтереççĕ. Культура дворецĕ туса пĕтермелле.

Çичĕ уйăх планне тултарнă

КАРАГАНДА, июлĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Ленинуголь» трестне кĕрекен малта пыракан 105-мĕш шахта коллективĕ çĕнĕ çитĕнÿ тунă. Паян çичĕ уйăх программи шучĕпе юлашки эшелон çĕр кăмрăкĕ тиесе янă. Кăçал заданирен ирттерсе 16.000 тонна çĕр кăмрăкĕ кăларнă.

105-мĕш шахтăра ĕçлекен горняксем Шахтерсен кунĕ тĕлне планран ирттерсе тата 4 эшелон çĕр кăмрăкĕ параççĕ.

Крым çыранĕсем патне пулă нумай пынă

ЕВПАТОРИЯ, июнĕн 27-мĕш. (ТАСС). Хура тинĕсре Крымăн хĕвеланăç çыранĕсем патне ставрида текен шултра пулăсен кĕтĕвĕ пырса тухнă. Хăшпĕр пулăсем икĕ килограмм сурă таяççĕ. Ватă пулăççсем те çак вырăна хальхин пек шултра ставрида пырса тухнине астумаççĕ.

Евпатори çыранĕсем патне скумбри пулăсен кĕтĕвĕ пырса çитнĕ.

Крымри пулă тресчĕ ставридăпа скумбри пулăсем тытма пуçланă.

ПАХА ÇУЛ-ЙĔРШĔН!

ÇУЛ-ЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне, процентпа)

Районсем, çул участокĕсем	Материал турттарнă	Чул сарнă	Кĕпер тунă	Çĕр купаланă
1. Шупашкар	133	112	100	103
2. Сĕнтĕрвăрри	117	100	110	115
3. Тăвай	122	79	100	117
4. Шăхасан	116	157	64	180
5. Муркаш	115	100	40	107
6. Чкаловски	93	120	58	94
7. Ишлей	93	67	44	96
8. Улатăр	91	70	52	100
9. Куславкка	85	65	66	75
10. Пăрачкав	83	25	58	—
11. Элĕк	77	90	45	92
12. Советски	77	57	11	65
13. Елчĕк	77	50	78	191
14. Октябрьски	77	55	38	28
15. Чурачăк	77	40	10	114
16. Вăрмар	72	62	100	77
17. Калинино	72	33	9	90
18. Комсомольски	69	100	59	92
19. Канаш	68	26	91	62
20. Çĕрпÿ	60	68	57	129
21. Первомайски	96	—	14	64
22. Етĕрне	50	32	64	58
23. Сĕнтĕр	50	45	63	55
24. Хĕрлĕ Чутай	42	58	54	46
25. Çĕмĕрле	42	14	59	23
26. Красноармейски	50	13	2	39
27. Вăрнар	39	3	65	123
28. Кувакино	39	26	32	40
29. Йĕпреç	32	20	47	39
30. Шăмăршă	30	—	20	40
243 çул участокĕ	75	47	29	100
241 çул участокĕ	51	28	72	36
50-мĕш МДС	40	38	2	67
242 çул участокĕ	59	—	19	—
240 çул участокĕ	38	6	27	85

Колхозниксен пуçарулăхĕ

Районти колхозниксем çул-йĕр строительствине хутшăнас ĕçе хăйсен патриотла тивĕçĕ, тесе шутлаççĕ. Вĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ: паха çулсем тăрăх халăх хуçалăхĕ валли кирлĕ грузсене хăвăртрах турттарса çÿреме ансатрах. Çулсем япăх пулсан промышленность таварĕсем, ялхуçалăх машинисем, минераллă удобренисем кÿрсе килме, государствăна тырă, пахча çимĕç вăхăтра парса тăма хĕн. Çавăнпа та ĕнтĕ республикăри ĕçсыннисем Тăвай районĕнчи колхозниксемпе çул-йĕр работникĕсен патриотла пуçарăвне тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Тăвайсем чĕнсе каланине пирĕн районти пур колхозсенче те колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче сÿтсе явса, социализмла обязательствăсем йышăннă.

Май уйăхĕнче ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсен канашлăвне ирттертĕмĕр. Унта государство заданине пурнăçласси, колхозниксене çул-йĕр тăвас ĕçе массăллăн хутшăнтарасси çинчен, ĕçе тĕрĕс йĕркелесси, пĕлтĕрхи çитменлĕхсемпе йăнăшсем çинчен тĕплĕн сÿтсе яврăмăр.

Политикăлла-массăлла ĕç КПСС райкомĕ çирĕплетнĕ план тăрăх пулса пырать. Коммунистсемпе комсомолецсем, ял Совечĕсен депутачĕсем—социализмла ăмăртăва пуçарса ертсе пыракансем. Вĕсем каласусем ирттереççĕ, боевой листоксем кăлараççĕ, ăмăрту итогĕсене тĕрĕслеççĕ, малта пыракансен опычĕпе меслетне сараççĕ. Районти культура çуртĕ художествăлла пултарулăх кружокĕсен вăйĕпе концертсем парать.

Ял Совечĕсем, колхозсем, бригадăсем плана срокчен тултарассишĕн, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Ăмăртура Кадыков ячĕпе тăракан колхоз членĕсем уйрăмах паха тĕслĕх кăтартнине палăртас пулать. Вĕсем çĕр чавса купаламалли, материалсем турттарса кăлармалли, чул сармалли плана 12 кун хушшинче тултарчĕç. КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозниксен патриотла ĕçне пысăка хурса хакларĕç, колхоза хăйсен кÿсса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç.

Заводски ял Советне кĕрекен «Красный флот», Молотов ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем государство планне пур кăтартусем енĕпе те срокчен тултарчĕç.

«Память Ленина» колхоз ытти çулсенче çул-йĕр строительстви енĕпе юлса пыратчĕ. Кăçал вăл задание срокчен пурнăçларĕ. Çул-йĕр бригадирĕ Г. Ильин юлташ тăрăшнипе бригада пур ĕçе те пысăк пахалăхпа турĕ.

«Правда» колхоз плана 119 процент тултарчĕ. Николаев, Федоров, Васильев плотниксем тăхăр кун хушшинче çĕнĕ кĕпер турĕç. План тăрăх ăна 12 кунта туса пĕтерме палăртнă пулнă.

«Красное знамя» колхоз членĕсем çул çинче çулсерен лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем чул сарса çул тумалли плана пилĕк кун хушшинче, ытти ĕçсен планне—11 кун хушшинче тултарчĕç.

Колхозниксем çавăн пек пуçарулă ĕçленипе тата социализмла ăмăрту анлăн сарăлнипе пула район 1953 çулхи çул-йĕр строительстви планне срокчен тата ирттерсе тултарчĕ. Анчах эпир унпа лăпланса лармастпăр. Районта çул-йĕр ĕçе малалла пырать.

А. СЕМЕНОВ,
Шупашкар райисполкомĕн председателĕ.

1953 çулхи III-мĕш кварталта ирттермелли лекцисен, докладсен тата каласусен

ТЕМАТИКИ

I.

1. Коммунистсен партийĕ—совет халăхĕн çул кăтартса ертсе пыракан вăйĕ.
2. Совет Союзĕ—мирĕн, демократин тата социализмăн никам аркатайми тĕрекĕ.
3. Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план — пирĕн çĕршыв социализмран коммунизм патне пымалли çул çинчи çĕнĕ пысăк утăм.
4. Совет çыннин ырлăхĕшĕн, совет халăхне ырлăх кÿрессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшасси—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн чи аслă законĕ.
5. Капитализмла çĕршывсенче тавар хакĕсем ÿсни тата ĕçсыннисен чухăнлăхĕ ÿссе пыни.
6. Паттăр Корея халăхĕпе Китай добровольцĕсем Американпа Англи захватчикĕсене хирĕç виçĕ çул хушши паттăр кĕрешни.
7. Халăхсем миршĕн кĕрешни.

II.

8. КПСС XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăх тĕлĕшпе йышăннă решенисем тата 1953 çулта тырпул пухса кĕртме хатĕрленес, пухса кĕртес ĕçри задачăсем.
9. Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ—колхоз пурнăçĕн тĕп законĕ.
10. Обществăлла хуçалăха пур майсемпе те тĕреклетсе аталантарни—колхозниксен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатмалли май.
11. Техникăпа туллин усă курни, ялхуçалăх производствинче наукăпа малта пыракан опыт çитĕнĕвĕсене ĕçе кĕртсе пыни—ĕç тухăçлăхне малалла ÿстермелли тата обществăлла производствăна вăйлатмалли май.
12. Ĕçе тĕрĕс организацилени тата колхозниксен ĕç дисциплинин çирĕп пулни—кашни колхоз хуçалăхра çитĕнÿсем тумалли никĕс.
13. Мари тата Мордва АССР-ĕсемпе социализмла ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсене пурнăçласси—Чăваш АССР-ĕнчи кашни районăн, кашни колхозпа МТС-ăн чыслă ĕçĕ.
14. Тырпула кĕске срокра тата тăккаламасăр пухса кĕртесси—ялхуçалăх работникĕсен чи пысăк задачи.
15. Тырпул хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарасси—колхоз хресченĕсен пĕрремĕш тивĕçĕ.
16. МТС—социализмла ялхуçалăхĕн хăватлă вăйĕ.
17. Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хуни, выльăх-чĕрлĕх валли лайăх витесем туни—обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатмалли чи кирлĕ услови.

III.

18. Перекетлĕх режимĕ—халăх хуçалăхне малалла вăйлатмалли хăватлă май.
19. 1953 çулхи плана пурнăçласси — республикăри промышленность работникĕсен хисеплĕ задачи.
20. Кашни рабочи хăйĕн нормисене тултарни тата ирттерсе тултарни—1953 çулхи плана срокчен тултармалли услови.
21. Пысăк пахалăхлă продукци туса кăларасси—кашни предприяти тивĕçĕ.
22. Строительство ĕçĕсене хăвăрт тата пысăк пахалăхпа тăвасси—республикăри мĕнпур строительсен задачи.
23. Производство новаторĕсен çитĕнĕвĕсене—массăсем хушшине.

КПСС ОБКОМĔН ПРОПАГАНДĂПА АГИТАЦИ ПАЙĔ.

И. В. Сталин произведенийĕсене чăвашла пичетлесе кăларни

Юлашки вăхăтра Чăваш АССР государство издательстви И. В. Сталинăн темиçе произведенине уйрăм кĕнекесем туса чăвашла кăларчĕ. Çак шутра «Кĕскен партири разногласисем çинчен» тата «Социал-Демократа» панă ответ» ятлă кĕнекесем пур. Ку произведенисене И. В. Сталин 1905 çулта çырнă, вĕсенче В. И. Ленинăн «Мĕн тумалла?» ятлă историлле произведенийĕн идейисене тĕрлĕ оппортунистсенчен çирĕп хÿтĕлесе малалла аталантарнă. И. В. Сталин социализмла ăс-тăн рабочи движенишĕн мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартса панă, стихийăлла рабочи движенипе социализмла ăс-тăн пĕр-пĕринпе мĕнле шайлашса тăни çинчен калакан ыйтăва пур енчен те тĕплĕн сăлтавласа, тарăн сутатса çырнă.

«Кĕскен партири разногласисем çинчен» тата «Социал-Демократа» панă ответ» произведенисене чăвашла чи пуçласа куçарнă, кашнине 5.000 экземпляр пичетлесе кăларнă.

БОЛГАРИРЕ В. И. ЛЕНИН СОЧИНЕНИЙĔСЕН 25-МĔШ ТОМНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КĂЛАРНА

СОФИЯ, июлĕн 1-мĕшĕ (ТАСС). Болгарири Коммунистсен партийĕн издательстви В. И. Ленин сочиненийĕсен 25-мĕш томне болгар чĕлхипе пичетлесе кăларнă.

Миршĕн кĕрешес ĕçре халăхсен сыхăлăхне тата ытларах вăйлатар!

Рабочисемпе служащисен Шупашкарта тата районсенче пулса иртнĕ пухăвĕсенчен

* * * * * *

Халăхсем хушшинчи туслăхшăн

Ĕç кунĕ вĕçленчĕ. Шупашкарти пир-авăр комбинатне тăвакансем хăйсен стадионне йышлăн пухăнчĕç. Партбюро секретарĕ Шереметьев юлташ, рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пухăвне уçса, КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарьне Н. Никитин юлташа сăмах парать. Вăл Берлинра июнĕн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ ĕçсем çинчен тĕплĕн каласа парать.

Пухура пулнисем пĕрин хыççăн тепри тухса калаççĕ. Федорова юлташ сăмах илет.

— Тĕнчере миршĕн кĕрешекенсен юхăмĕ ÿссех пырать,—терĕ вăл.—Çакă мир тăшманĕсене питĕ хытă хăратать. Берлинра пулса иртнĕ авантюра Хĕвеланăç Германире фашистла организацисене мĕнле тĕллевпе туса хунине уççăнах кăтартрĕ.

Совет халăхĕ, тет вăл малалла, ют çĕршывсене сутăннă çынсен ирсĕр ĕçне чунчĕререн питлет, нимĕç халăхĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тата Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ ертсе пынипе ÿсĕм хыççăн ÿсĕм тăвасса шанса тăрать. Эпир, совет çыннисем, мир тĕрекĕн—Совет Союзĕн вăйхăватне татах ÿстерĕпĕр.

Трибуна умĕнче паллă стахановец каменщик Ситнов юлташ. Вăл сменăри нормăна яланах чылай ирттерсе тултарать, ĕç пахалăхне тăтăшах ÿстерет. Стахановец-коммуниста авантюристсен ирсĕр ĕçĕ çав тери хытă тарăхтарать. Çавăнпа та вăл пĕтĕм чĕререн тухакан хĕрÿллĕ сăмах калать.

— Хĕвеланăç Германири фашистсем, ют çĕршывсенчи империалистсем хĕтĕртнипе, нимĕç халăхне каллех хĕн-хурпа асаплăха кĕртсе ÿкересшĕн. Çук, вĕсен ĕç тухмĕ!—тет вăл.—Тĕнчери мире юратакан халăхсем фашистла ушкăнсен ултавлă ĕçĕсене яланах арката-арката тăкĕç. Эпир, пир-авăр комбиначĕ тăвакансем, провокаторсен авантюрине хамăрăн стахановла ĕçпе отпор паратпăр. Тĕп пулччăр çĕнĕ вăрçă чĕртекенсем!

— Совет правительстви, Китай Халăх Республики, Демократиллĕ Корея Халăх Республики тăрăшнипе тĕнчери лару-тăру çăмăлланасса эпир шансах тăтăмăр,—терĕ прораб Благушин юлташ.—Корейăра перемири тăвасси çинчен пулса иртекен каласусене пĕтĕм общественность тимлĕ сăнаса тăчĕ. Анчах Ли Сын Ман çĕнĕ провокаци турĕ—тыткăна лекнĕ çар çыннисене ултавлă майпа «ирĕке» кăларнă. Çапла вара çак çынсене Корея Халăх Республикине хирĕç пыракан вăрçа хутшăнтарма шутлаççĕ. Çак провокаци хыççăнах Хĕвеланăç Германири сутăнчăксем Берлинра ирсĕр ĕç турĕç. Паллах, ку вăл Америка империалисчĕсем ертсе пынипе пулнă. Провокаторсен путсĕр ĕçне кĕске вăхăтрах çĕмĕрсе аркатрĕç. Совет çыннисем Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парас ĕçре нимĕç халăхне пур майсемпе те пулăшса пырĕç, хамăрăн Тăван çĕршыв хăватне ÿстерессишĕн хăйсен пĕтĕм пултарулăхне, хастарлăхне кăтартса кĕрешĕç. Сывă пултăр нимĕç халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи туслăх! Тĕп пулччăр мир тăшманĕсем!

Столярсен бригади бригадирĕ Сарабаев юлташ сăмах илет. Вăл Демократиллĕ Германи Республикинчи рабочисем Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ çине пысăк шанăç хуни çинчен калать.

«Легпромстройăн» 11-мĕш номерлĕ трест управляющийĕ Каплин юлташ çапла каларĕ:

— Германири демократиллĕ вăйсем, миршĕн тăракан мĕнпур нимĕçсем заговорщиксемпе провокаторсен вăрă-хурахла ĕçне чĕререн ылханаççĕ. Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕççыннисем правительство ют çĕршывсене сутăннă çынсен авантюрине çĕмĕрсе аркатас тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсене пĕтĕм чĕререн ырлаççĕ. Берлинри рабочисем, Потсдамри чугун çул çинче ĕçлекенсем, Цвиккаури инженерсем, Лейпцигри ученăйсем, искусствăпа литературăра ĕçлекенсем, хресченсемпе вĕренекенсем хăйсен пухăвĕсенче никама пăхăнман, мире юратакан, демократиллĕ, пĕрлĕхлĕ Германи туса хурасси çинчен калаççĕ. Ют çĕршывсене тара кĕрешнĕ провокаторсен ирсĕр ĕçне хăвăрт çĕмĕрсе тăкни Демократиллĕ Германи Республикинчи политикăлла строй çирĕп пулнине кăтартса пачĕ. Мир çулĕчи тĕрĕс çул пулса тăнине нимĕç халăхĕ лайăх ăнланать. Германири рабочисене пĕтĕм демократи лагерĕ пулăшĕ. Нимĕç халăхĕ Демократиллĕ Германи Республикин правительстви тавра, Германири социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕ тавра тачăрах пĕтĕçсе, мирлĕ ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасса совет çыннисем çирĕп шанса тăраççĕ.

Пуху пĕр шухăш-кăмăллă пулса резолюци йышăнчĕ. Унта çапла калана: «Эпир çакна шанса тăратпăр: Германири рабочи класпа пĕтĕм ĕççыннисем нимĕнле провокаципе те нарăнмĕç, сыхăлăха ÿстерĕç, мире юратакан, пĕрлĕхлĕ, демократиллĕ Германи туса хурас тĕлĕшпе Демократиллĕ Германи Республикине хастарлă ĕçпе пулăшĕç». Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем Тăван çĕршыв мухтавĕшĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме пулчĕç.

Мир ĕçĕ çирĕп алăра

Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен нумай çынлă пухăвĕ пулса иртрĕ.

Партком секретарĕ Бугаев юлташ пухăва уçса, КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарьне Михайлов юлташа сăмах парать.

— Хĕвеланăç Германири сутăнчăксем, Америка империалисчĕсем хĕтĕртнипе, июнĕн 17-мĕшĕнче Берлинра провокациллĕ ирсĕр ĕç турĕç,—тет вăл.—Çак авантюрăна Америка империалисчĕсем нумайранпа хатĕрленĕ. Вĕсем Хĕвеланăç Германири сутăнчăксене хĕçпăшал, укçа-тенкĕ парса тăнă. Ылханлă провокаторсен авантюри 24 сехет хушшинче путланса ларчĕ. Германири ĕççыннисем хăйсен социалистла пĕрлĕхлĕ партийĕ тавра тачăрах пĕтĕçсе пыраççĕ, вĕсем провокаторсене тивĕçлĕ отпор пачĕç.

Америка империалисчĕсене сутăннă çынсен ирсĕр провокацийĕ Корейăра Ли Сын Ман тăвакан провокаципе тÿррĕмĕнех çыхăнса тăрать. Июнĕн 18-мĕшĕнче çурçĕртен пуçласа ирччен, американецсем ирĕк панипе, тыткăнри çар çыннисен лагерĕсенчен 25 пин çар çыннине «ирĕке кăларнă». Ку вăл перемири çинчен пыракан каласусене сĕмсĕррĕн пăсни пулать.

Совет Союзĕнчи миллионшар ĕççыннисем Берлинра пулса иртнĕ авантюра пирки чĕререн тарăхаççĕ, вĕсем фашистла провокаторсене ылханса питлеççĕ, мир ĕçĕшĕн тата çирĕпрех тăма сăмах параççĕ.

Штамповочнăй цех начальникĕ Кудряшов юлташ сăмах илет. Вăл çапла каларĕ:

— Демократиллĕ Германи Республики тунă çитĕнÿсем Америка империалисчĕсене тарăхтараççĕ. Демократиллĕ Германи Республикин правительстви мир ĕçне тĕреклетес, демократиллĕ пĕрлĕхлĕ Германи тăвас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Çакă вăл империалистсен кăмăлне каймарĕ. Вĕсем Германи халăхне пăлхатса, ăна хирĕçтерсе яма хăтланчĕç. Анчах ирсĕр провокаци путланса ларчĕ. Империалистсен ытти провокацийĕсем те çавăн пекех намăслăн путланса ларĕç! Совет халăхĕ нимĕç халăхĕпе пĕр шухăш-кăмăллине палăртать, ăна сыхăлăха ÿстерме, мир ĕçне тĕреклетме чĕнет.

Кудряшов юлташ хăйĕн сăмахне çапла вĕçлерĕ:

— Германипе Совет Союзĕнчи ĕççыннисен туслăхĕпе пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлени сывă пултăр!

Мир тăшманĕсен провокацийĕсем тĕп пулччăр!

— Америка империалисчĕсем Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса парасшăн мар,—терĕ пухура заводăн главнăй конструкторĕ Воронель юлташ.—Вĕсем нимĕç халăхне çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне кĕртсе ярасшăн. Вăрçă провокаторĕсем, нимĕçсене вăрçăра вилсе пĕтмелли салтаксем, çĕнĕ агрессисем тумалли çарăн тара кĕрĕшнĕ салтакĕсем туса хурасшăн. Анчах Германири ĕççыннисем империалистсемпе вĕсене сутăннă çынсем хыççăн каймĕç. Ĕççыннисем мирлĕ те ирĕклĕ пурнăçпа пурăнасшăн.

Заводри паллă стахановка слесарь-сборщик Монахова юлташ сăмах илет.

— Америка империалисчĕсем тĕнчери халăхсене çĕнĕ вăрçă вутне кĕртсе ÿкересшĕн, чечекленекен хуласемпе ялсене кĕл туса вĕçтересшĕн, ĕççыннисене юн ăшне чикесшĕн. Берлинра туса ирттернĕ ирсĕр провокаци çакна питĕ уççăн кăтартса парать. Эпир паян çак пухăва килсе хамăрăн чун-чĕрене шăнăçайми тарăхăва палăртатпăр, реакцин хура вăйĕсене ылханса питлетпĕр. Эпир хамăрăн хастарлăха темиçе хут ÿстерме, мир ĕçне тĕреклетме сăмах паратпăр,—терĕ вăл.

Инструментальнăй цехри рабочи Токсубаев юлташ çапла каларĕ:

— Тара сутăннă хура юнлă этемсем Берлин урамĕсенче сĕмсĕр провокаци туни пире, мир çыннисене, чĕререн тарăхтарчĕ. Вăл тарăхăва нимĕнле сăмахсемпе те каласа параймăн. Мир тăшманĕсем тем тĕрлĕ авантюрăсем те туma хăтланаççĕ, мир ĕçне хавшатма, мирлĕ çынсене пĕрпĕрне хирĕçтерсе яма тăрăшаççĕ. Анчах вĕсен усал шухăшĕ пурнăçланмасть. Пĕтĕм тĕнчери ырă кăмăллă халăхсем вăрçа хирĕç тăраççĕ. Халĕ вĕсем çирĕппĕн çапла калаççĕ: «Хăвăрăн юнлă аллăра Демократиллĕ Германи Республики çинчен илĕр!». Эпĕ мирпе демократишĕн кĕрешекен нимĕç халăхне хĕрÿллĕ салам яратăп! Манăн нимĕç халăхне çапла шантарса калас килет: вăл миршĕн пыракан кĕрешÿре пĕччен мар. Вăл мире юратакан çĕршер миллион çынсен хăвatлă ретĕнче тăрать.

Пуху, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, Берлинри рабочисене чĕнсе резолюци йышăнчĕ. Резолюцире пĕтĕм тĕнчери мире юратакан çынсем Демократиллĕ Германи Республикинчи рабочи класпа тата пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен калана, нимĕç рабочийĕсене сисĕмлĕхе ÿстерме, мир ĕçне тĕреклетме чĕннĕ. Эпир, тенĕ резолюцире, мир ĕçне тĕреклетес тесе хамăрăн вăй-хала хĕрхенмĕпĕр, стахановла ĕçлесе паха продукци туса кăларăпăр, пĕтĕм тĕнчери мире тĕреклетме пулăшăпăр.

Миршĕн, демократишĕн

КАНАШ. Хулари предприятисемпе учрежденисенче ĕççыннисен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Пур пухусенче те совет çыннисем фашистла провокаторсене пĕтĕм чĕререн ылханса, сыхăлăха ÿстерме, миршĕн кĕрешекенсен речĕсене тата та тачăрах пĕтĕçтерме кирли çинчен калаççĕ. Вĕсем çĕнĕ вăрçă пуçарма тăрăшакан Америка империалисчĕсен путсĕр ĕçĕсене сивлеççĕ.

— Ют çĕршывсене сутăннă çынсен Берлинри провокацилле ĕçĕ путланчĕ,—терĕ пăравуссен деповĕнче пулса иртнĕ пухура Бакулин машинист.—Мире, демократие юратакан нимĕç халăхĕ провокаторсем хыççăн каймарĕ. Çĕнĕ вăрçă чĕртме хатĕрленекенсем çакна пĕлсе тăччăр: миршĕн тăракан халăхсем тĕрлĕ авантюристсен кирек мĕнле ирсĕр ĕçне те аркатса тăкĕç. Тĕп пулччăр агрессорсем! Эпир Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, телейлĕ пурнăçшăн кĕрешетпĕр, стахановла ĕçпе мир тĕрекне — Тăван çĕршыва çирĕплететпĕр.

Пухура çавăн пекех Машкина инженер, Мордвов токарь, Печикин машинист тата хула Совет исполкомĕн председателĕ Синицын юлташсем тухса калаçрĕç.

Пухусем çавăн пекех вагонсем юсакан заводра, чугун çул станцийĕнче, кондукторсен резервĕнче, топливо складĕнче, промстройăн строительствăпа монтаж кантурĕнче тата ытти çĕрте те пулса иртрĕç.

Пухусенче йышăннă резолюцисенче Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕççыннисем демократиллĕ пĕрлĕхлĕ Германи туса хурассине совет халăхĕ çирĕп шанса тăнине палăртаççĕ.

Г. ИСАЕВ.

Район центрĕнчи пухура

СĔНТĔР. (Телефонпа). Район центрĕнчи рабочисемпе служащисен тата колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ.

Райсовет исполкомĕн председателĕ Н. Петров юлташ, пухăва уçса, Берлинра пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн КПСС райкомĕн секретарĕ М. Перлов юлташ сăмах тухса каларĕ.

Фашистла провокаторсем Берлинра ирсĕр ĕç тунă пирки ĕççыннисем пĕтĕм чĕререн тарăхса, мир тăшманĕсене ылханса питлеççĕ. Совет çыннисем мир ĕçне малалла тата та ытларах тĕреклетме мĕнпур вăя хурса ĕçлеме тупа тăваççĕ.

— Америкăри вăрă-хурахсем нимĕç фашизмне çĕнĕрен ура çине тăратасшăн тапаланаççĕ,—тет Ф. Мамайкин юлташ.—Çук, тÿрĕ шухăш-кăмăллă халăха улталаймĕç. Фашистла авантюра путланса ларчĕ, малашне те çавăн пекех пулать.

Сĕнтĕрти пир-авăр фабрикинчи стахановка М. Афанасьева юлташ мир ĕçне тĕреклетес тесе ытларах вăй хурса ĕçлеме чĕнет.

Пухура пулнă ĕççыннисем ют çĕршывсене тара кĕрĕшнĕ çынсен путсĕр ĕçĕсене ылханса решени йышăнчĕç, нимĕç халăхне пĕрлĕхлĕ пулма, Демократиллĕ Германи Республикин правительствипе социалистла пĕрлĕхлĕ парти тавра тачăрах пĕтĕçме, сыхăлăхлă пулма чĕнсе каларĕç.

М. ИСАЕВ.

Редакцие килнĕ çыру

Куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăлармалла

ШĂМĂРШĂ. Районта, пĕтĕм çĕршыври пекех, тавар çаврăнăшĕ çултан çул ÿсет. Халĕ кашни магазинта, лавккара пусмв тавар, атă-пушмак, тумтир тата ытти япаласем те сахал мар. Таварсем çителĕклĕ кÿрсе килни, вĕсен ассортименчĕ нумайланни ĕççыннисене савăнтарать.

Райпо тавар çаврăнăш планне тăтăшах ăнăçлă тултарать. Çиелтен пăхсан, вăл хăйĕн умĕнче тăракан задачăна пурнăçласа пырать, теме пулать. Тĕплĕнрех тишкерсе пăхсан, унăн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурри курăнать. Колхозниксем, специалистсем, колхозсемпе учрежденисем час-часах хăйсен кулленхи ыйтăвĕсене тивĕçтерейменççĕ. Вĕсем хуçалăхра тата куллен кирлĕ таварсем магазинсенче сахаллишĕн, хăшпĕр япаласене туянма вуншар километра е инçетерех те кайма тивнĕшĕн пăшăрханаççĕ.

Халĕ кашни ялта чылайăшĕ çĕнĕ çуртсем лартаççĕ, киввисене юсаççĕ, колхозсем выльăх витисем, сушилкăсем т. ыт. те тăваççĕ. Çавăнпа кирпĕч нумай кирлĕ. Договор тăрăх Шăмăршăри райпромкомбинатăн ĕççыннисене сутма 200 пин кирпĕч туса памалла. Çур çул иртрĕ, анчах вăл райпона пĕр кирпĕч те паман-ха.

Район территорийĕнче вăрман нумай, вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промартельсем те сахал мар. Апла пулин те районта урапа, сĕтел-пукан, хуплă çуна, тăрантас, ача-пăча валли урапа-çуна тупса илме çук. Килхуçи хĕрарăмсем валашка, чĕрес, ала, çăкăр хывмалли кĕреçе ыйтаççĕ, анчах вĕсене районти предприятисемпе артельсем туса кăлармаççĕ. Райпромкомбинатпа промартельсем çав япаласене туса кăларма пултараймаççĕ тесе калама, чĕртавар сахал тесе калама нимĕнле сăлтав та çук.

Суту-илÿ работникĕсем ĕççыннисене мĕнле йышши таварсем кирлине пĕлеççĕ. Пайщиксем райпона сĕнÿсем сахал мар параççĕ. Анчах райпромкомбинатпа промартельсен руководителĕсем çаврăнăçусăр пулнине суту-илÿ организацийĕсем ĕççыннисен хăшпĕр ыйтăвĕсене тивĕçтерейменççĕ.

— Эсир ыйтакан япаласене туса кăларма Вырăнти промышленность министерстви план паман,—ответлеççĕ райпромкомбинатра ĕçлекенсем.

— Чăвашпромсовет хушсан хăлăха мĕн кирлине пурне те туса кăларма пулать,—теççĕ промартельсен председателĕсем.

Районти план комиссийĕнче ĕçлекенсем халăха тата колхозсемпе учрежденисене мĕнле йышши таварсем кирлине пĕлеççĕ, анчах аллисене усса çеç лараççĕ, хăйсен пуçарулăхне ÿстерме тăрăшмаççĕ. Пирĕн шухăшпа, республикăри министерствăсемпе ведомствăсен, Госпланăн райпромкомбинатсемпе промартельсем мĕнле йышши япаласем туса кăлармаллине палăртнă чухне районти организацисем ыйтнине шута илмелле. Апла тумасан райисполкомсемпе ял Совечĕсем суйлавçăсен наказĕсене пурнăçлама, ĕççыннисен кулленхи ыйтăвĕсене кирлĕ пек тивĕçтерме пултараймаççĕ.

Чăваш АССР Суту-илÿ министерстви çителĕксĕр ĕçленине палăртмасăр хăварма май çук. Министерство куллен кирлĕ таварсен хакне йÿнетме тăрăшмасть. Вăл тĕрĕслесе тăманнипе усă курса, промсоюзсем тата Вырăнти промышленность министерстви таварсен хакне хăйсен кăмăлне кайнă тăрăх хураççĕ. Чăвашдревпромсоюз çирĕплетнĕ тăрăх, кустăрмасен пĕр станĕ 187 тенкĕ тăрать. Вырăнти промышленность министерстви пĕр пек кустăрмасенех 206 тенкĕ сутма палăртнă. Ытти таварсен хакĕсем те пĕр пек мар.

Суту-илÿ министерствин çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермелле, таварсен хакне йÿнетме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ вырăнти промышленноçпа промысла коопераци предприятийĕсенче куллен кирлĕ таварсем, килте тата хуçалăхра усă курмалли япаласем, строительство материалĕсем туса кăларассине чылай сарма палăртрĕ. Шăмăршă районĕнче вырăнти промышленноçпа промысла кооперацине аталантарма мĕн кирли пурте çителĕклĕ, райсовет исполкомĕ пуçаруллă пулни, ăна республикăри организацисем тивĕçлĕ пулăшу пани çеç кирлĕ.

И. ГЛАДКОВ,
Шăмăршă райпо председателĕн заместителĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Строительствăна хăвăрт, йÿнĕ, лайăх тăвассишĕн кĕрешмелле"

Июнĕн 2-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленсе тухнă «Строительствăна хăвăрт, йÿнĕ, лайăх тăвассишĕн кĕрешмелле» ятлă статьяра Канашри строительствăпа монтаж кантурĕнче туxса тăракан «Строитель» стена хаçачĕн çитменлĕхĕсене критикленĕччĕ. Унта стена хаçачĕ рабочисем хушшинче социализмла ăмăрту организацилесси, малта пыракан строительсен опытне сарасси çинчен питĕ сахал çырнине, критикăлла материалсем çуккине, редколлеги членĕсем рабочисемпе çыхăнса ĕçлеменнине кăтартса панăччĕ.

Строительствăпа монтаж кантурĕнчи пуçламăш парторганизаци «Строитель» стена хаçачĕн ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. Статьяна пуçламăш парторганизацин усă пухăвĕнче сÿтсе явнă. Пуху стена хаçат редколлегине çĕнĕрен суйлама, стена хаçатне виçшер экземпляр кăларса тăмалла тума йышăннă.

„Машина-трактор станцийĕнче лăпкă"

Куславкка машина-трактор станцийĕн дирекцийĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра июнĕн 6-мĕшĕнче пичетленнĕ «Машина-трактор станцийĕнче лăпкă» ятлă статьяра фактсене тĕрĕс кăтартса пани, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ. МТС-ра машинăсене хăвăртрах юсаса пĕтерес тесе ĕçлеме тытăннă, комбайнерсем çителĕклĕ хатĕрлес шутпа, Канашри механизаторсен шкулĕнче вĕренме 8 çын янă.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине Çĕрпÿ районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра клуб ĕçлеменни çинчен çыру килнĕччĕ. Çак çырăва тĕрĕслеме, унта кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерме Çĕрпÿ райисполкомне янăччĕ.

Райисполком çырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Чапаев ячĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕнче клуба ĕçе ярасси çинчен сÿтсе явнă, ăна колхозăн хуçалăх центрĕ вырнаçнă Вичкасси ялне куçарса кăçалах ĕçе кĕртме йышăннă.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен рольне ÿстерессишĕн

Ишлей районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кая мар тĕштырă, 900 пăтран кая мар çĕрулми, 30-шар пăт кантăр вăрри, 9-шар пăтран кая мар нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕ туса илме обязательство илчĕç. Уйрăм колхозсемпе уй-хир бригадисем тата тухăçлăрах тырпул туса илме обязательствăсем йышăнчĕç.

Илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн колхоз ĕçченĕсем социализмла ăмăртăва анлăн сарса ячĕç, вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешÿре пысăк çĕнтерÿ турĕç.

Район çураки планне пур культурăсемпе тăрăх та ирттерсе тултарчĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çураки планне 8 кун маларах тултарнă. Колхозсен хуçалăхне çирĕплетес тĕлĕшпе чылай çитĕнÿсем тунă. Çакă вăл, чи малтан, колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем çирĕпленнине, вĕсен влиянийĕпе организаторла вăйĕ ÿссе пынине кăтартса парать.

Халĕ районта 31 колхозра пуçламăш парторганизацисем пур. Колхозсенчи коммунистсенчен нумайăшĕ — рядовой колхозниксем.

Парти райкомĕ колхозсене ертсе пырас ĕçе яланах колхозри парторганизацисем çине таянса, вĕсем урăх туса пыма тăрăшать. Ку вăл çураки ĕçĕсенче уйрăмах палăрчĕ. Коммунистсен вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве пуçаракансем тата хавхалантаракансем пулса тăчĕç. Аçта йывăр—вĕсем çавăнта пулчĕç, витĕмлĕ сăмахпа, тухăçлă ĕçпе колхозниксене çĕнтерÿ тума хавхалантарса пычĕç. Çураки вăхăтĕнче колхозсенчи коммунистсенчен 200 çын ытла уй-хирте, ака-суха тунă çĕрте ĕçлерĕç.

Кăçалхи çураки агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçланипе, ака-суха ĕçĕсене паха тунипе палăрса тăрать. Хăшпĕр колхозсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене 7—8 кун хушшинче акса пĕтерчĕç. Пĕр колхозра та алăпа акнă тĕслĕхсем пулман. Çураки ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен коммунистсен пухăвĕсенче тăтăшах сÿтсе явнă, уй-хир ĕçĕсенче палăрнă çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса панă.

Колхозри пуçламăш парторганизацисене пулăшас ĕçре парти райкомĕ тĕрлĕ майсемпе усă курать. Райком, чи малтан, парторганизацисене вырăнта пулăшу парассине ытларах хаклать. Çакна май парти райкомĕн секретарĕсемпе ытти ответлă работникĕсем колхозсенчи пуçламăш парторганизацисенче час-часах пулаççĕ. Вĕсем парторганизацине мĕнле пулăшу кирлине тĕплĕн пĕлеççĕ, парти пухăвĕсенче пулаççĕ, коммунистсемпе тĕл пулса калаçаççĕ, хаклă сĕнÿсем параççĕ.

Парти райкомĕ пулăшса пынипе колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем хăйсен кĕрешÿри пултарулăхне мĕнле ÿстерсе пыни çинчен чылай тĕслĕхсем кăтартса пама пулать. Андреев ячĕпе тăракан колхозри парторганизацие илер. Калас пулать, парторганизаци малтанлăха çителĕксĕр ĕçленĕ, хăй умĕнче тăракан задачăсене тивĕçлипе пурнăçласа пыман. Колхоз хуçалăха аталантарас ĕçре юлса пынă, çураки ĕçĕсене вăраха тăснă.

Кăçал вара çак колхоз çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерчĕ, çураки планне пур культурăсем тăрăх та тултарчĕ. Кунта халĕ тырпула пăхса ÿстерес, ăна пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Колхоз членĕсем хушшинче социализмла ăмăрту анлăн сарăлнă. Çак ÿсĕмсем парторганизацин ĕçне вăйлатнинчен, парти райкомĕ пулăшса пынинчен ытларах килчĕç. Халĕ ку парторганизацире пухусем вăхăтра, йĕркеллĕ иртеççĕ. Парторганизаци контроль правипе туллин усă курать. Парторганизаци секретарĕ А. Романов юлташ парти райкомĕпе çирĕп çыхăнса ĕçлет, вăл хушнисене пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешет.

Райком уйрăм колхозри коммунистсен паха пуçарăвĕсене пур парторганизацисенчи коммунистсем патне çитерсе тăрать. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци правленипе пĕрле ялхуçалăх артельне аталантармалли виçĕ çуллăх план тунă. Ку плана колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пăхса тухса ырланă. Колхозниксен пухăвĕ виçĕ çул хушшинче колхоза тĕреклетес тĕлĕшпе мĕнмĕн тумаллине палăртнă, вĕсене пурнăçламалли майсемпе майсене кăтартса панă. Колхоз 1955 çул вĕçленнĕ тĕле кашни гектартан вăтам шутпа 19-шар центнер тĕштырă, вăл шутран 20-шер центнертан кая мар ыраш, 175-шер центнер çĕрулми, 5-шер центнер кантăр вăрри туса илме тата ытти культурăсен тухăçлăхне ÿстерме задача лартнă. Виçĕ çуллăх планра обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллисене те конкретлăн кăтартса панă.

Çак паха пуçарăва КПСС райкомĕн бюровĕ ырларĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозăн виçĕ çуллăх планне колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарĕнче сÿтсе яврăмăр. Семинарта пулнисем ку ыйтăва активлăн тишкерсе тухрĕç, хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç. Кун хыççăн ытти колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем те çак ыйтăва парти пухăвĕсенче сÿтсе яврĕç, виçĕ çуллăх план тума чылай коммунистсене хутшăнтарчĕç.

Пуçламăш парторганизацисен ĕçри ăнăçлăхĕ вĕсен секретарĕсен пултарулăхĕнчен нумай килет. Парторганизаци секретарĕ вăл—колхозри политикăлла руководитель. Райком парторганизаци секретарĕсен ĕçри пултарулăхне ÿстерес тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕ. Кашни уйăхрах колхозсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарне ирттеретпĕр. Унта партиллĕ организацилле тата партилле-политикăлла ĕç ыйтăвĕсем тăрăх докладсем тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ çинчен лекцисем пулаççĕ. Кăçал парторганизаци секретарĕсен семинарĕнче парти пухăвне хатĕрлесе ирттересси, социализмла ăмăртăва организацилесе ертсе пырасси, колхозниксем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе йĕркелесси, контроль правипе усă курасси тата ытти ĕçсем çинчен—пурĕ 17 ыйту сÿтсе явнă.

КПСС райкомĕн бюровĕ парторганизацисен пĕтĕмĕшлĕ ĕçĕсем çинчен сÿтсе явать. Кăçал пилĕк колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕсен отчетне итленĕ. Нумаях пулмасть парти райкомĕн бюровĕ Чапаев ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕн А. Григорьев юлташăн отчетне итлерĕ. Отчет тăрăх парторганизаци обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, выльăхсем валли сурт-йĕрсем тăвас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине, кунпа пĕрлех ĕçе лайăхлатмалли майсене палăртрĕ. Райком парторганизацие практикăлла пулăшу пама хăйĕн работникĕсене ячĕ. Райком пулăшнипе пула халĕ ĕнтĕ кунти парторганизаци ĕçĕ чылай лайăхланчĕ.

Райком колхозри парторганизаци секретарĕсен отчечĕсене бюро ларăвĕсенче итленисĕр пуçне, пленумсенче те сÿтсе явать. Сăмахран, кăçал КПСС райкомĕн пленумĕсенче Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Дружба» колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçĕсем çинчен, «Большевик» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе мĕнле ертсе пыни çинчен сÿтсе явнă.

Парторганизацин кĕрешÿри пултарулăхĕ шалти ĕççене мĕнле йĕркеленинчен нумай килет. Юлашки вăхăтра колхозсенчи пур парторганизацинче те пухусем вăхăтра, йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Парти райкомĕ колхозри парторганизаци пухăвĕсен идейăлла шайне çÿлĕ пусăма çĕклессишĕн тăрăшать. Ку тĕлĕшпе тунă ĕçсем парторганизацин ответлăхне ÿстерме, самокритикăпа аялтан килекен критикăна вăйлатса пыма, коммунистсен авангардлă рольне ÿстерме пулăшрĕç. Куна эпир «Сталинская гвардия», «Правда», «Знамя труда», «Красный плуг», Карл Маркс ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисен ĕçĕсенче те лайăх куратпăр. Асăннă парторганизацисенче политикăлла кампанисем çинчен сÿтсе явнисĕр пуçне, колхоз хуçалăхĕн тĕп ыйтăвĕсене—çĕрĕç культурине ÿстерессипе, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси, партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисенчен тухса тăракан задачăсене чыслăн пурнăçласси çинчен тĕплĕн сÿтсе яваççĕ. Ку парторганизацисенче усă пухусем те тăтăшах пулса иртеççĕ.

Коммунистсем пухусенче, колхозри ĕçсем çинчен сÿтсе явнисĕр пуçне, райкомпа унăн пайĕсен тата районти учрежденисен ĕçĕсенчи çитменлĕхсене те палăртаççĕ. Райком коммунистсен критикинчен яланах тивĕçлĕ выводсем тăвать, районти партипе совет организацийĕсен ĕçне лайăхлатма тăрăшать. Анчах та ку тĕлĕшпе пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Хрущев ячĕпе тăракан, «Активист» колхозсенчи пуçламăш парторганизацисенче пухусене тĕплĕн хатĕрлемесĕр ирттереççĕ. Çитменнине тата пухусене вăхăтра пухмаççĕ. Парторганизаци секретарĕсем Савельевпа Надиков юлташсем колхозри çитменлĕхсемпе килĕшсе лараççĕ.

Парти райкомĕ колхозсенчи парторганизацисен ĕçри çитменлĕхĕсене пĕтерсе пырать, пуçламăш парторганизацисен рольне ÿстерме май коммунистсемпе ялхуçалăх ĕçченĕсен вăйне партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлама мобилизацилет.

В. ДМИТРИЕВ,
КПСС Ишлей райкомĕн секретарĕ.

Утă çулас, силос хывас ĕçе васкатар, вăйлă ӳсекен тырпула хăвăрт, тăккаламасăр пухса кĕртме хатĕр пулар!

* * * *

Пысăк çĕкленӳпе

МУРКАШ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем иртнĕ çулта кĕрхи тырăсене, кăçал—суртрисене чи кĕске срокра, агротехника тĕлĕшĕнчен питĕ лайăх акса хăварнă. Калчасене вăхăтра апат панă, çумкурăкĕсенчен тăрăшса тасатнă. Ырминкамни тăрăшса ĕçленин результачĕ куç умĕнчех: колхоз уй-хирĕсенче халĕ вăйлă тырпул çитĕнет.

— Кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илетпĕр, хамăр çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçлатпăр,—теççĕ колхозниксем.

Вăйлă тырпула тăккаламасăр пухса кĕртме хатĕр пулмалла. Колхозниксем тырă вырма, авăн çапма тата государствăна тырă пама хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ.

Кăçал колхозăн кĕрхипе çурхи тырăсем тата пăрса йышши культурăсем пурĕ 1.130 гектар пухса кĕртмелле. Вăл шутра 250 гектар çинчи тырра комбайнпа пухса кĕртме машина-трактор станцийĕпе договор тунă. Колхозăн 7 жнейка пур, вĕсенчен пиллĕкĕшне юсаса лартнă. 220 урапа хатĕрленĕ. Лаша кӳлмелли хатĕрсем çителĕклĕ. Михĕсемпе шăналăксем те кирлĕ чухлех. Нумай пулмасть 500 михĕ туяннă.

Тырпул пухса кĕртмелли машинăсемпе транспорт инвентарьне вăхăтра юсас тĕлĕшпе колхоз тимĕрçисем тăрăшаççĕ. Çак ĕçре уйрăмах комсомолецсем А. Тодиновпа И. Иванов тата ватă колхозник О. Оньков юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Колхозра авăн çапма хатĕрленес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса иртнĕ. Артелĕн витнĕ итемсем 11, вăл шутран çиччĕшне тасатса хатĕрленĕ. Пĕтĕм тырра машинăпа çапма, çак ĕçре электричество вăйĕпе анлăн усă курма палăртнă. Тăхăр молотилкăран пиллĕкĕшне юсанă та ĕнтĕ. Зерносушилка ĕçе хатĕр.

Чи малтан çапса илнĕ тырра государствăна пама тытăнаççĕ. Тырă турттарнă çĕрте 4 автомашинăпа ĕçлемелле пулать.

Тырпула вăхăтра пухса кĕртесси ĕç лашисем самăр та вăйлă пулнинчен те нумай килет. Çакă конюхсене хăйсене шанса панă ĕçе лайăх туса пыма хушать. Колхозри конюхсем хăйсене çирĕплетсе панă лашасене тăрăшса пăхаççĕ.

Колхоз тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ туса хатĕрленĕ. Ăна çак кунсенчех колхозниксен пухăвĕнче çирĕплетеççĕ.

Ăнса пулнă тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртме кăтартуллăн хатĕрленессишĕн колхозри бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Социализмла ăмăртура М. Оньков тата И. Спаскин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем малта пыраççĕ.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илес ĕмĕтпе, çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Вĕсене тухăçлă ĕçлеме колхозри коммунистсемпе комсомолецсем хавхалантарса пыраççĕ.

Июнĕн 24-мĕшĕнче колхоз утă çулма тухрĕ. Çак ĕçĕн малтанхи кунĕсенчех колхоз членĕсем пысăк хастарлăхпа ĕçленине палăртрĕç. Вĕсем тырпул пухса кĕртме тытăниччен утта пĕтĕмпех çулса пухма, силос хывмалли плана 80 процентран кая мар тултарма пулаççĕ.

М. ОСИПОВ.

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

ЕТĔРНЕ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлеме тăрăшаççĕ.

Кăçал нумай çул ӳсекен курăксем 57 гектар çине акса хăварнă. Иртнĕ çулта 70 гектар çине клевер акнăччĕ. Клевер лайăх ӳсет 15 гектар клевер—вăрлăх валли 8 гектар çине хĕвелçаврăнăш акнă.

Колхозниксем çак кунсенче клевер çулма тытăнчĕç. Бригадăсенче хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Икĕ кун хушшинче 55 гектар çинчи клевере çулнă. Çулнă клевера типĕтсе итем çине капана хывма тытăнчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлекен бригада членĕсем 7 тонна силос хывса хăварчĕç. Сурăх ферминче ĕçлекенсем 200 лав çăка милĕкĕ хатĕрлеме палăртнă. Паянхи куна 56 лав хатĕрленĕ.

В. ЗАХАРОВ.

Машинăсене юсаççĕ

ЭЛĔК. «Правда» колхоз тырпул пухса кĕртме тимлĕн хатĕрленет.

Суртрисем пурте аван ӳсеççĕ. Вĕсене пĕрремĕш хут çумкурăксенчен тасатнă, хăшпĕр вырăнта иккĕмĕш хут çумлама тытăннă.

Колхоз тырпул пухса кĕртмелли ĕç планне тума тытăнчĕ. Урапа таврашĕсене юсанă, халĕ вырмалли тата сăвăрса тасатмалли машинăсене юсаççĕ.

Колхоз 74 гектар çинчи нумай çул ӳсекен курăксене çулса пуçтарнă, 160 тонна силос хывнă.

Нумай пулмасть иртнĕ пухура колхозниксем тырпул пухса кĕртме июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне хатĕрленсе çитме йышăнчĕç.

С. ТИХОНОВ.

Çумкурăксене тасатсах тăраççĕ

ЕЛЧĔК. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем тырпулсене лайăх пăхса çитĕнтерме тăрăшаççĕ, калчасене çумкурăксенчен тасатсах тăраççĕ. 80 гектар çинчи çĕрулмине пĕрремĕш хут çумкурăксенчен тасатнă тата рет хушшисене сухаласа тухнă.

Тырпул калчисене лайăх пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе уйрăмах Я. Егоровпа И. Егоров коммунистсем ертсе пыракан бригадăсем тăрăшса ĕçлеççĕ. **В. НАУМОВ.**

Колхоз вăйĕ

ЧКАЛОВСКИ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз организацине хуçалăх енчев çултан-çул тĕрекленсе пырать. Колхозри обществăлла çуртсемпе колхозниксен килĕсенче радио калаçать тата Ильич лампочкисем çутатаççĕ.

Артель членĕсен пурнăçĕ пуянланса, лайăхланса пырать. Колхоз членĕсем çак икĕ çул хушшинче 15 çĕнĕ çурт турĕç. Ĕç дисциплини кӳнтан-кун çирĕпленсе пырать. Ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксен шучĕ сахалланнă. Иртнĕ çулта колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх тырă чылай илчĕç.

И ТАРАСОВ.

Трактор бригадинчи учет

Пирĕн социализмла ялхуçалăхĕ çултан-çул çĕнĕ техникăпа пуянланса пырать. Машина-трактор станцийĕсем колхозсене пысăк тухăçлă тырпул туса илме пулăшаççĕ, колхозниксен ĕçне çăмăллататçĕ.

МТС-сен трактор бригадисем колхозсене питĕ нумай ĕç туса параççĕ. Çавăнпа та трактор бригадисенче учет ĕçне туса пырасси пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Вăхăтра тата тĕрĕс туса пынă учет, чи малтанах, МТС-па колхоз тунă договора мĕнле пурнăçласа пынине сийĕнчех пĕлсе тăма май парать. Çавăн пекех кашни трактористпа комбайнер е ытти механизатор сменăри ĕç нормине мĕн чухлĕ тултарнине, горючипе сĕрмелли материалсене мĕн чухлĕ расходланине тата перекетленине шута илсе пыни ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшать.

Чурачăк МТС директорĕ кăçал, çураки ĕçĕсем пуçланиччен, трактор бригадисенче ĕçлекен учетчик-заправщиксене пухса ятарласа хатĕрленĕ программа тăрăх курс иртнерчĕ. Нумай çул хушши ĕçлекен учетчик-заправщиксем хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç.

Иртнĕ çулта 7-мĕш трактор бригадинчи учетчик-заправщик М. Петров, 11-мĕш бригадăри А. Димитриев, 12-мĕш бригадăри П. Васильев учетчик-заправщиксем уйрăмах лайăх ĕçлерĕç. Асăннă трактор бригадисем çултаlăкри плана пур енĕпе те иртерсе тултарнă, колхозсемпе МТС тунă договора бригада ĕçленĕ кашни колхозра кăтартнă срокра пурнăçланă.

Суракинче 11-мĕш трактор бригади мала тухрĕ. Ку бригадăна коммунист Н. Лаврентьев юлташ ертсе пырать. Кунта кашни сменăра хăш тракторист нормăна мĕнле пурнăçланине кăтарту хăми çине çырса пынă. Механизаторсем пĕр-пĕрин ĕçĕпе тăтăшах интересленнĕ, малта пыракансен опычĕпе паллашнă. Бригадăри учетчик-заправщик А. Димитриев юлташ кашни тракторист задание мĕнле тултарнине, договора мĕнле пурнăçласа пынине уйрăм тетрадь çине çырса шута илсе пынă.

Учетчик-заправщикăн ĕçĕ çăмăл мар. Унăн кашни сменăра пур трактор патне те çитмелле, тунă ĕçе кĕске вăхăт хушшинче шутласа çырса пымалла.

Трактор бригадисенче учет ĕçне тĕрĕс туса пырасси пĕр учетчик-заправщикран кăна килмест. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра тата авăн çапнă чухне кашни комбайнпа молотилка çумĕнчех весовщиксем ĕçлеççĕ. МТС директорĕ весовщиксене пухса кашни çулах 1—2 кунлăх семинарсем иртерет. Учетчик-заправщиксен весовщиксен ĕçне кулленех сăнаса пымалла, вĕсене пулăшмалла.

Трактор бригадисенчи учет ĕçне тĕрĕс те вăхăтра туса пыни колхозсенчи учет ĕçĕпе тачă çыхăнса тăрать. Трактор бригади тунă ĕçе уй-хир бригадирĕ куллен йышăнмалла. Анчах та çакна пур колхозсенче те пурнăçламаççĕ-ха. Кун пек тĕслĕхсем час-часах «Динамо», «Комсомолец», «Красный путиловец» тата ытти колхозсенче те пулаççĕ.

Ялхуçалăхĕнчи чи хĕрӳ ĕç вăхăчĕ — тырпул пухса кĕртесси çывхарса килет. Ăнса пулнă тырпула пĕр тăкаксăр тата кĕске срокра пухса кĕртмелле. Эпир тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра учет ĕçне тата лайăхрах йĕркелеме тăрăшăпăр.

И. КОНСТАНТИНОВ,
Чурачăк МТС-ĕн аслă бухгалтерĕ.

МИРШĔН КĔРЕШЕС ĔÇРЕ ХĔРАРĂМСЕМ ПЫСĂК ВĂЙ

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн делегачĕ, СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Е. А. Фурцева каласа пани

Июнĕн 5—10-мĕшĕсенче,—тенĕ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне Е. А. Фурцева юлташ,—Дани столицинче, Копенгагенра хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ пулса иртрĕ. Вăл çĕр чăмăрĕ синче пурăнакан малта пыракан çынсен пурнăçĕнче пăллă ĕç пулса тăрать. Вăл халăхсен миршĕн кĕрешес ĕçне пысăк вăй хуни пулать.

Пĕтĕм тĕнчери демократла хĕрарăмсен федерацийĕ пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен конгресĕн ĕçне хутшăнма чĕнсе каланине мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсен тĕрлĕ сийĕсем тата хĕрарăмсен организацийĕсем хапăл туса йышăнчĕç. Федераци чĕнсе калванине 70 ытла çĕршыври хĕрарăмсен организацийĕсем йышăнчĕç, конгресс ĕçне хутшăнма килĕшни çинчен пĕлтерчĕç. Конгресс умĕн чылай çĕршывсенче пысăк ĕç туса иртнерĕ: хатĕрленӳ комитечĕсем туса хунă, канашлусем иртнерĕ, пĕтĕм тĕнчери конгреса иртерме укçа-тенкĕ пухнă.

Тĕслĕхрен, Данире конгреса кайма делегатсем тата хăнасем суйлас тĕлĕшпе пулса иртнĕ пухусене 40.000 ытла хĕрарăм хутшăннă. Италире хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ пухăнас умĕн хăйсен конгресне иртнерĕ. Чылай çĕршывсенче конгреса хатĕрленес ĕç йывăр условисенче иртнĕ. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе хĕрарăмсен уйрăмах пысăк паттăрлăхпа ĕçлемелле пулнă.

Конгресс ĕçне 82 çĕршыври хĕрарăмсен представителĕсем хутшăнмалла пулнă. Анчах чылай делегацисем конгресс ĕçне хутшăнма пултарайман, мĕншĕн тесен вĕсене Копенгагена пыма ирĕк паман. Çавăн пек Триест, Сири, Панама, Перу, Саудовски Арави, Камерун, Золотой Берег, Кени, Нигери, Çурçĕр Родези тата ытти çĕршывсен делегацийĕсене Копенгагена пыма ирĕк паман. Çав сăлтавпах конгресс ĕçне паттăррăн çапăçакан Корея, Вьетнам, Малайя хĕрарăмĕсем те хутшăнма пултарайман.

Демократла хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн генеральнăй секретарĕ Мари-Клод Вайян Кутюрье сĕннипе трибуна патне Демократиллĕ Корея Халăх Республики, Вьетнам, Малайя ялавĕсене илсе тухнă саманта делегаткăсем нихçан та манас çук. Конгресра пулнисем çак çĕршывсен делегачĕсем пленка çине çырса илнĕ сăмахĕсене вуласа панине тăвăллăн алă çупса йышăннă. Пурте пĕр саслă пулса çак çĕршывсен делегацийĕсем конгресра пулнă, тесе йышăнмалла тунă.

Конгресс хĕрарăмсен аслă пухăвĕ пулса тăчĕ Конгресра 70 çĕршывран 1.895 делегатка пулнă. 19 çĕршыври хĕрарăмсен представителĕсем конгресс ĕçне пуçласа хутшăннă. Вĕсенчен 14 çĕршыври хĕрарăмсем халиччен демократла хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери федерацине кĕмен пулнă.

Конгресс пынă вăхăтра эпир çĕр чăмăрĕ çинче пурăнакан миллионшар хĕрарăмсемпе пĕрлĕхлĕ пулнине туйса тăтăмăр. Делегаткăсем хăйсен сăмахĕсенче вĕсен интересĕсемне ирĕкне палăртрĕç. Çакăн çинчен конгресс ячĕпе çĕршер телеграммăсем, саламсем килсе тăни лайăх каласа парать.

Конгресс ĕçĕ миршĕн кĕрешес малăлла иртрĕ. Докладсенче тата тухса каланă сăмахсенче уйрăмах çакна палăртнă: хĕрарăмсен мĕнпур çĕршывсемпе халăхсен нацилле никама пăхăнманлăхĕшĕн, кашни халăх хăйĕн кун-çулĕшĕн хăй ирĕклĕ пулмалли правишĕн кĕрешмелле.

Конгресс виçĕ ыйту сӳтсе явнă: «Ача амăшĕ, ĕçлекен тата граждански пулса тăракан хĕрарăмсен прависене кĕрешсе илсе хӳтĕлес тĕлĕшпе хĕрарăмсем умĕнче тăракан задачăсем», «Хĕрарăмсем мире тата хĕрарăмсемпе ачасен интересĕсене хӳтĕлесе тунă ĕçсен итогĕсем тата ку ĕçĕн малашлăхĕ», «Демократла хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери федерацине суйлассси».

Малтанхи ыйту тăрăх доклад тунă Андреа Андреен (Швеци) тĕрлĕ çĕршывсенчи хĕрарăмсем мĕнле пурăнни çинчен, вĕсем этеме тивĕçлĕ пурнăç условисемшĕн кĕрешни çинчен каласа панă. Хĕрарăмсем этемлĕхĕн çур пайĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем миллионшарăн промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, халăха вĕрентес ĕçре культурăпа искусство енĕпе ĕçлеççĕ. Общественноçăн анлă масси хĕснипе Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕ хăйĕн хартийĕнче хĕрарăмсен пĕртанлăхĕ çинчен пĕлтерчĕ пулсан та, çак принципа ытла та çителĕксĕр пурнăçлаççĕ.

Чылай çĕршывсенче хĕрарăмсен нимĕнле правасем те çук. Пĕр пек ĕçшĕн хĕрарăмсене арçынсемпе пĕртан тӳлемелли йĕркене пăсаççĕ е тата хĕрарăмсен ĕçлев правине пачах шута хумаççĕ. Госпожа Андреа Андреен капитализмла çĕршывсенче хĕрарăмсен пĕртанлăхне ирсĕррĕн путарса пыни çинчен калакан фактсем илсе кăтартать. США-ра ĕçĕн чылай отраслĕсенче хĕрарăмсене ĕç укçи, арçынсемпе танлаштарсан, 30—40 процент сахалтарах тӳлеççĕ. Англире хĕрарăмсене, арçынсемпе танлаштарсан, 53 процент чухлĕ кăна тӳлеççĕ. Колониллĕ çĕршывсемпе опекăра тăракан çĕршывсенче хĕрарăмсен пурнăçĕ тата йывăртарах.

Индире, Иранра, Турцире, Алжирта, Тунисра, Мароккăра хĕрарăмсенчен 80—90 проценчĕ хут пĕлмест. Хĕрарăмсене граждан прависем тĕлĕшĕнчен те хыттăн пӳлсе тăраççĕ. 15 çĕршывра хĕрарăмсем государство влаçĕн органĕсене суйлама тата суйланма пултараймаççĕ.

Совет Союзĕнче тата халăх демократи çĕршывĕсенче хĕрарăмсем тулли правăпа усă кураççĕ, вĕсем пĕтĕм пурнăçра пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Андреа Андреен доклачĕ тăрăх тухса калакансем нумай пулнă. Конгресс трибуни умне делегатсем пĕрин хыççăн теприн тухаççĕ, вĕсем капитал çĕршывĕсенчи хĕрарăмсемпе ачасен йывăр пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ.

Делегацисем Совет Союзĕнчи, Китай Халăх Республикинчи, халăх демократи çĕршывĕсенчи, Демократиллĕ Германи Республикинчи хĕрарăмсем суйласа янă делегатсем тухса каланисене тăвăллăн алă çупса, чĕререн саламласа йышăннă. Çак çĕршывсенчен килнĕ делегатсем хăйсен çĕршывĕсенчи хĕрарăмсен телейлĕ пурнăçĕ çинчен, миллионшар çынсем мирлĕ ĕçре паттăррăн кĕрешни çинчен, ачасен телейлĕ пурнăçĕ çинчен каласа панă.

Демократла хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн председателĕ госпожа Эжени Коттон иккĕмĕш ыйту тăрăх доклад тунă. Вăл пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсем умĕнче тăракан задачăсен пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен каласа панă. Ку вăл мире сыхласа хăварассишĕн пĕтĕм халăхпа пĕрле кĕрешесси, ачасене çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕнчен хӳтĕлесси, вĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн тата воспитани парассишĕн кĕрешесси пулать. Хĕрарăмсем халăхсем хушшинчи миршĕн кĕрешес ĕçре пысăк вăй пулса тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнчере хĕрарăмсен демократилле юхăмĕ анлăн сарăлни хĕрарăмсем халăхсен кĕрешĕвне активлă хутшăннине вăрçă сулне чарса лартма кирлине лайăхрах ăнланса илнинчен килет. Çемьесен пурнăçне сыхласа хăварас пулать, хăйсен çĕршывĕсен нацилле никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе тăрас пулать. Хăйсен прависемшĕн Итали, Франци, Бельги, Англи, Латинла Америка, Голланди, Япони тата ытти çĕршывсенчи хĕрарăмсем паттăррăн кĕрешеççĕ. Колониллĕ çĕршывсемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенче хĕрарăмсен юхăмĕ ӳссе, вăйланса пырать. Вĕсем хăйсен çĕршывĕсен нацилле никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе тăраççĕ.

Эжени Коттон мире хӳтĕлессишĕн кĕрешес ĕçре хĕрарăмсене пĕрлешме, мĕнпур çĕршывсенче ачасене хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитетсем туса хума чĕннĕ.

Конгресс делегачĕсен сăмахĕсенче хĕрарăмсен демократилле организацийĕсен ӳссе пыракан вăйĕсене шанса тăни, хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери юхăмĕн вăйĕпе хăватне шанса тăни палăрать. Делегаткăсем çакна палăртнă: хĕрарăмсем чылай çĕршывсенче правасемсĕр пулсан та, хăйсене хыттăн хĕсĕрлеççĕ пулсан та, вĕсем хăйсен прависене ытларах та ытларах туйса илме пуçлаççĕ, пĕрлешӳре вăй илеççĕ, хăйсен пĕтĕм вăйне хурса миршĕн, хăйсен прависемшĕн, хăйсен ачисене хӳтĕлессишĕн, вĕсен телейĕшĕн кĕрешеççĕ.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ демократла хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн ĕçĕсене ырласа резолюци йышăнчĕ, çавăн пекех пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен прави çинчен декларации тата пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсене чĕнсе воззвани йышăнчĕ. Конгресс миршĕн кĕрешекенсене хĕсĕрленине хирĕçлесе резолюци йышăнчĕ.

Конгресс Корейăри, Вьетнамри, Малайăри вăрçăсене чарса лартассишĕн, Германи, Австри, Япони ыйтăвĕсене мирлĕ майпа татса парассишĕн, пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ туса хурассишĕн кĕрешме кирлине уйрăмах палăртрĕ.

Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕ, — тенĕ Е. А. Фурцева,—халăхсем мире хӳтĕлессишĕн кĕрешекен сулпа малалла çĕнĕ утăм туни пулчĕ. Конгресс халăхсем хушшинчи туслăхпа пĕрлешӳлĕх идейин аслă вăйне кăтартса пачĕ. Конгресс чĕнсе каланисем, унăн решенийĕсем ĕçсыннин хĕрарăмĕсен анлă сийĕсем патне çитĕç, мир ĕçне тĕреклетĕç, пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăхшăн, хĕрарăмсен прависене хӳтĕлессишĕн, ачасен телейĕшĕн кĕрешессине тата ытларах вăйлатĕç.

Мускаври хĕрарăмсен активĕн пухăвĕ

Мускаври М. Горький ячĕпе тăракан культурăпа кану паркĕн Симĕс театрĕнче июлĕн 1-мĕшĕнче столицăри хĕрарăмсен активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухăва Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Мускав хула комитечĕ пухнă.

Инди, Япони, Вьетнам, Латинла Америка çĕршывĕсен представителĕсем—Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн делегачĕсем, çавăн пекех тата мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Япони комитечĕн председателĕ профессор Икус Ояма президиум сĕтелĕ хушшине тухсан, вĕсене алă çупса саламланă.

Пухăва КПСС Мускав хула комитет секретарĕ Е. А. Фурцева юлташ уçнă. Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн ĕçĕсем çинчен фашизма хирĕç кĕрешекен совет хĕрарăмĕсен комитечĕн председателĕ Н. В. Попова юлташ доклад туса панă.

Пуху Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери конгресĕн ĕçĕсене ырласа резолюци йышăннă.

Пуху хыççăн пысăк концерт пулнă. Концерта ССР Союзĕн Пысăк театрĕн, государство эстрадин артисчĕсем, Совет Çарĕн А. В. Александров ячĕпе тăракан юрăпа ташă ансамблĕ хутшăннă. (ТАСС).

Пахча çимĕçсене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсене пĕтерер

Пирĕн редакцие Чурачăк районĕнчи Мичурин ячĕпе тăракан колхозри А. Павлова, А. Петрова, Е. Тихонова колхозницăсенчен çыру килчĕ. Вĕсем пахча çимĕçсене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсем çинчен тата вĕсемпе кĕрешмелли майсем çинчен каласа пама ыйтаççĕ. Вĕсен ыйтăвĕ çине ответлесе, çак статьяна пичетлетпĕр.

Кăçалхи çанталăк условийĕсенче пахча çимĕçсене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсем тата чир-чĕрсем хытă ĕрчеççĕ. Хальхи вăхăтра уйрăмах пахча çимĕç пăрçи нумай тĕл пулать. Вăл купăста, çарăк, сухан тата ытти пахча çимĕçсен калчисене те сиен кӳрет. Çак пăрçа кăвакрах тĕслĕ, сунаçĕсем çинче икĕ хура е сарă йĕрсем пур Пахча çимĕç пăрçисем çулçăн çиелти сийне çиеççĕ. Кун пек чухне ӳсентăран начар ӳсет, пăрçасем сиен кӳнĕ çулçăсем типсе лараççĕ, ӳсентăран хăй те пĕтсе ларма пултарать.

Пахча çимĕç çинче пăрçасем курăнма пуçласанах вĕсене пĕтерес пулать. Вĕсене ДДТ тата гексахлоран тусчĕсем, извĕçпе пĕрле париж ешенĕ, анабадуст сапса пĕтереççĕ. Çак химикатсем çук пулсан, кĕлпе те, табак тусанĕпе те усă курма юрать.

Пĕр гектар çинчи пахча çимĕçе пăрçасенчен тасатма ДДТ тусчĕ 20—30 килограмм, гексахлоран тусчĕ 15—18 килограмм, анабадуст 30 килограмм кирлĕ. Анабадуст—извĕçе е кĕле анабазин-сульфатпа хутăштарнă химикат. Унта 100 пайран 92 пайĕ известь е кĕл, 8 пайĕ анабазин-сульфат пулать. Пахча çимĕçе сапма çав хутăшран пĕр процентлă шĕвек туса хатĕрлеççĕ.

Купăстапа йӳç кăшман тата ытти хăшпĕр пахча çимĕçсен çамрăк хунавĕсем çинче час-часах симĕс тĕслĕ вĕтĕ хурт-кăпшанкăсем тĕл пулаççĕ. Ку вăл—купăста шăрки. Вăл пахча çимĕç çулçисене çисе пурăнать. Шăркасем сиен кӳнĕ вырăнта ӳсентăран шуралса юлать, çулçăсем пĕркеленеççĕ.

Купăста шăркисене анабазин-сульфатпа пиретрум препарачĕпе пĕтереççĕ. Ӳсентăрана анабазин-сульфатпа сапас пулсан, 0,1—0,2 процентлă шĕвек тумалла, унта 0,4 процент чухлĕ супăнь хушмалла. Пĕр гектара сапса тухма 20 килограмм анабазин-сульфат кирлĕ.

Купăстана, çарăка, тутлă кăшмана, çавăн пекех ытти пахча çимĕçсене купăста лĕпĕшĕ пысăк сиен кӳрет. Çав лĕпĕшĕн малти çунаçĕсем шурă пулаççĕ, ама лĕпĕшĕн кунсăр пуçне тата икĕ хура çаврашкасем пур, аçа лĕпĕшĕн çав çаврашкасем çунатсем айĕнчен кăна курăнаççĕ. Купăста лĕпĕшĕ хăйĕн çăмартисене çулçăн аялти енне хурать.

Ӳсентăрана лĕпĕш хурчĕсем сиенлеççĕ. Вĕсем кăвак-симĕс тĕслĕрех пулаççĕ, хуртсен хура пăнчăсем, сарă йĕрсем пур. Хурт тăршшĕ—40 миллиметр таран. Çамрăк хуртсем çулçăн çемçе пайне çисе пурăнаççĕ, унăн çиелти пайне тивмеççĕ, ӳссе çитĕнме пуçланисем çулçăна пĕтĕмпех çиеççĕ, унăн хытă пайĕсене анчах хăвараççĕ.

Купăста лĕпĕшĕпе ăнăçлă кĕрешес тесен, унăн çăмартисене пĕтермелле, пахча çимĕçе ДДТ тата гексахлоран тусчĕсемпе сапса тухмалла (гектар çине 20—30 килограмм); çумкурăксене вăхăтра çумласа пăрахмалла, мĕншĕн тесен вĕсем çинче лĕпĕш çăмартасем хума пултарать.

Купăста лĕпĕшĕпе çарăк лĕпĕшĕ пĕр майлă. Вăл, çулçăсемсĕр пуçне, купăста аврине те пăсать. Çарăк лĕпĕшне купăста лĕпĕшне пĕтернĕ пекех пĕтереççĕ.

Пахча çимĕçсене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăсенчен купăста хуртне уйрăмах асра тытмалла. Вăл купăстана, çарăка, редиса, хĕрлĕ кăшмана, пăрçана, хĕвелçаврăнăшне, сухана т. ыт. те пысăк сиен кӳрет. Унăн лĕпĕшĕ хăмăр тĕслĕ. Хурчĕсем тĕрлĕ тĕслĕ пулаççĕ. Вĕсем çулçăна витĕрех çисе тухаççĕ, купăста аври ăшне те кĕрсе каяççĕ. Çавна пула ӳсентăран хăрса каять.

Купăста хурчĕсене ДДТ тата гексахлоран тусчĕсемпе (купăста аври ăшне кĕриччен) пĕтермелле. Кирлĕ химикат çук пулсан, хуртсене тата лĕпĕш çăмартисене алăпа та пухса илме пулать. Хĕл каçма юлакан куколкăсене пĕтерме кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

Купăста, тутлă кăшман, редис тата ытти пахча çимĕçсен тымарĕсене купăста шăни хурчĕсем сиенлеме пултараççĕ. Купăста шăни кĕл тĕслĕ, вăл пӳртри шăна майлах.

Хуртсем ӳсентăрана сиен кӳме тытăннине кăнтăрлахи вăхăтра çулçăсем шанса кайнинчен тата вĕсем кăвакланма пуçланинчен пĕлеççĕ. Хуртсем пахча çимĕçсен тымарĕсене çиелтен те, ăшĕнчен те çиеççĕ. Тутлă кăшман тата редис ăшне вĕсем çийĕнчех кĕреççĕ.

Купăста шăнине пĕтерме ДДТ тата гексахлоран тусчĕсемпе усă кураççĕ. Вĕсемпе пахча çимĕçе хăйне те, ун йĕри-тавра тăпра çине те сапаççĕ. Асăннă тустсем пĕр гектар валли 15—20 килограмм кирлĕ. Ӳсентăран тĕпĕ патне супăньпе хутăштарса тунă пĕр процентлă анабазин-сульфат шĕвекне те сапма юрать (пĕр литр шыв çине 10 грамм анабазин сульфат, 5 грамм супăнь яраççĕ). Тăпра çине сапма çавăн пекех хăйăрпа, табак тусанĕпе, извĕçпе хутăштарнă нафталинпа та усă курма пулать.

Пĕтĕм пахча çимĕçсене, уйрăмах купăстана, кишĕре, çĕрулмине тата пăрçана голые слизни текен хурт-кăпшанкăсем пысăк сиен тăваççĕ. Вĕсен ӳт-пĕвĕ çаврака та вăрăмрах пулать. Çав хурт-кăпшанкăсем çулçăна çисе яраççĕ, çĕрулмине, тымарçимĕç тăррисене кăшлаççĕ. Пахча çимĕçсене вĕсем çĕрлехи вăхăтра ытларах сиенлеççĕ, кăнтăрла тăпра ăшĕнче е çулçăсем айĕнче пытанса пурăнаççĕ.

Асăннă хурт-кăпшанкăсене пĕтерме пахчасене таса тытмалла, çимĕçсене пуçтарса кĕнĕ хыççăн вĕсен юлашкисене пĕтĕмпех пухса илмелле, иртерех кĕрхи çĕртме туса хăвармалла. Ӳсентăрансем çинче слизьсем палăрсанах, вĕсене тин çеç сӳнтернĕ извĕçпе е извĕçпе хутăштарнă табак тусанĕпе, çĕрлехи вăхăтра суперфосфатпа сапса тухмалла. Пĕр гектар çине сапма 240—360 килограмм суперфосфат, 200 килограмм известь кирлĕ. Слизьсем нумай сарăлнă вырăнсем тĕл пулсан, вĕсене пĕтерме канавсем тăваççĕ. Канавсем тĕпне известь е кĕл сапмалла.

Пĕтĕм пахча çимĕçсене çавăн пекех медведка текен хурт-кăпшанка сиенлет. Унăн тăршшĕ 50 миллиметр таран пулать. Малти урисем сарălса вĕçленеççĕ, медведка вĕсемпе тăпрана чавма пултарать. Вăл ытларах çĕрулмине, кишĕре, хĕрлĕ кăшмана, купăстана, помидора сиен кӳрет. Медведкăсене пĕтерме канавсем тăваççĕ (унтан вĕсене пухса илсе тăраççĕ), çавăн пекех наркăмăшланă япаласемпе те усă кураççĕ (пыллантарнă тĕштырă, çăнăх е сăсăл,—вĕсене пĕр-пĕр наркăмăшлă япалапа хутăштараççĕ).

Хĕрлĕ кăшман долгоносикĕ текен хурт-кăпшанкă нумай тĕл пулать. Вĕсем хĕрлĕ кăшман, мăкăнь, хĕвелçаврăнăш тата ытти чылай пахча çимĕçсен çулçисене çисе пурăнаççĕ. Долгоносик хурчĕсем вара тĕрлĕ ӳсентăрансен тымарĕсене çиеççĕ.

Долгоносика тĕрлĕ майсемпе пĕтереççĕ: сĕтеклĕ çулçăсене наркăмăшласа параççĕ, кăшман акнă пусă йĕри-тавра канавсем тăваççĕ, хире чăх-чĕпсем илсе тухаççĕ, ДДТ тусчĕпе усă кураççĕ. Ӳсентăрансене долгоносикпа кĕрешме удобренисемпе апат пани аван пулăшать. Унăн çăмартисемпе хурчĕсене пĕтерме ретсем хушшине кăпкалатса тăмалла.

Озимая совка текен хурт-кăпшанкăпа кĕрешме кирлине те манма юрамасть. Унăн гусеницисем купăстана, помидора, хăяра, кавăна, тымарçимĕçсене хытă тапăнаççĕ. Вĕсем ӳсентăран тымар кăларакан тĕлне кăшласа татаççĕ. Совкăна пĕтерме пĕр гектар валли ДДТ тусчĕ 20 килограмм кирлĕ. Кунсăр пуçне тата ăна çулçăсене наркăмăшпа хутăштарса парса та пĕтереççĕ.

Совка-гамма текен хурт-кăпшанкă пĕтĕм йышши пахча çимĕçсен çулçисене, чечекĕсене çисе пĕтерме пултарать. Çак хурт-кăпшанкă гусеницин 6 мăшăр ура пулать, вăл симĕс-сарă тĕслĕ, аяккисенче шурă-сарăрах йĕр пур. Гусеница тăршшĕ 32 миллиметра çити пулать. Совка-гаммăна ДДТ тусчĕпе пĕтермелле, пусса çумкурăксенчен тасатсах тăмалла.

Хĕрлĕ кăшманпа кишĕре хура тĕслĕ кăшман шăрки пысăк сиен кӳме пултарать. Сиенленĕ çулçăсем пĕркеленсе лараççĕ. Ку шăркана купăста шăркине пĕтермелли майсемпех пĕтермелле.

Купăстапа тутлă кăшмана час-часах купăста кĕвивчен хытă аптраççĕ. Унăн гусеницисем çап-çутă симĕс, йĕке майлă, 12 миллиметр тăршшĕ пулаççĕ. Вĕсем çулçăн çемçе пайне çисе яраççĕ. Купăста кĕвине пĕтерме кашни гектар çине ДДТ тата гексахлоран тусчĕсене 20—30 килограмм сапмалла. Çимĕçсене пухса кĕртсен вĕсен юлашкийĕсене пуçтарса илмелле тата кĕрхи çĕртмене таран сухаласа хăвармалла.

Сухана сиен тăвакан хурт-кăпшанкă скрытнохоботник пур. Унăн нăррисем вĕтĕ, шупка-шурăрах. Хурчĕсем çутă сарă тĕслĕ. Скрытнохоботник сиенленĕ сухан çулçи çинче шурă йĕр пулать. Çулçă вара тăрринчен пуçласа типме тытăнать.

Çак хурт-кăпшанкăпа кĕрешмелли майсем: скрытнохоботник ернĕ сухансене пĕтермелле; пахча çимĕç пусă çаврăнăшне тĕрĕс тытса пымалла, çĕнĕрен лартакан сухана кивĕ вырăнтан çур çухрăм е пĕр çухрăм хушши инçетерех лартмалла; кĕркунне çĕртме сухине тарăн туса хăвармалла.

Сухана çавăн пекех сухан кĕви, ытти хăшпĕр хурт-кăпшанкăсем те сиен кӳреççĕ.

Пахча çимĕçсене хурт-кăпшанкăсем сиенленĕ пулсан, вĕсем тĕрлĕ чир-чĕрсенчен те ытларах аптраççĕ. Купăста, тутлă кăшман, çарăк, турнепс çинче кила текен чир пулать. Ку чир тымарсене сиенлет, вĕсем çинче тĕрлĕ вырăнта çăпан евĕрлĕ мăкăльсем ӳссе лараççĕ. Кила чирĕ ӳсентăрана ӳснĕ вăхăтра тăпраран ерет.

Хĕрлĕ кăшман, кишĕр, петрушка çинче шурă çĕрĕк (белая гниль), бактериллĕ нӳрлĕ çĕрĕк (мокрая бактериальная гниль) тата çулçă ула-чăлаланни (пятнистость листьев) тĕл пулать.

Шурă çĕрĕкпе чирленĕ тымарçимĕç çийĕнче шурă тĕслĕ сий пулса каять. Бактериллĕ нӳрлĕ çĕрĕке пула тымарçимĕç çемçелет, хуралма тытăнать, унтан вăл йăлтах çĕрсе каять. Хĕрлĕ кăшман çулçи ула-чăлаланни (йĕри-тавра хĕрлĕрех тĕслĕ ула-чăла çаврашкасем) çуллахи вăхăтăн иккĕмĕш пайĕнче, йĕпе-сапа çанталăк тата ăшă тăнă вăхăтра пулма пултарать. Çак чирпе кĕрешме АБ препаратпа усă кураççĕ. Вăл пĕр гектар çине 15—20 килограмм кирлĕ.

Помидор час-часах бактериальнăй рак чирĕпе аптрать. Вăл калчана та, ӳссе çитĕннĕ ӳсентăрана та сиен кӳрет. Çак чир нӳрĕ ытла нумай пулсан хытă сарăлать. Ăна пула помидор туни шанса каять. Тунасем çинче малтан сарă-шурă, каярахпа хăмăр йĕрсем курăнма пуçлаççĕ. Çимĕç çинче варринче хура пăнчăллă шурă лаптăксем пулаççĕ.

Бактериальнăй ракпа чирленĕ помидорсене тăпăлтарса пăрахмалла, вĕсене пахчаран илсе кайса çунтарса ямалла.

Л. СЕМЕНОВА,
агроном.

Августра Бухарест хулинче Пӗтӗм тӗнчери ҫамрӑксемпе студентсен 4-мӗш фестивалӗ пулать. Фестивале мирпе туслӑх ячӗпе ирттерессӗ. Румыни Халӑх Республикинчи предприятисенче Рабочи ҫамрӑксен союзӗн бригадисем фестивале хатӗрленсе, производство планне ирттерсе тултарассишӗн тата перекетлӗхшӗн кӗрешеҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Павел Ткаченко ячӗпе тӑракан трикотаж фабрикинчи работница Елена Печи, вӑл ӗҫ нормине 50 процент ирттерсе тултарать.

РУМЫНИ ТЕЛЕГРАФ АГЕНТСТВИН фотоӳкерчӗкӗ.

„Ҫамрӑк ӑрӑвӑн телейлӗ пурнӑҫ правине кӗрешсе илмелле"

ДЕМОКРАТИЛЛӖ ҪАМРӐКСЕН ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ФЕДЕРАЦИЙӖН СЕКРЕТАРИАЧӖ ПӖЛТЕРНИ

БУХАРЕСТ, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн секретариачӗ хаҫатсенче пичетлесе кӑларма ҫакӑн пек пӗлтерӳ панӑ:

Тӗнчери ҫамрӑксем тӗнчери лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатассине шанса тӑнӑ вӑхӑтра, вӗсем ҫамрӑк ӑру интересӗсемшӗн туслӑх туса хума май паракан мӗнпур сӗнӳсене хавхаланса йышӑннӑ вӑхӑтра, Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ, ҫав туслӑх шухӑшӗпе хавхаланса, нумаях пулмасть «Ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери ассамблейине», Христианла ҫамрӑк рабочисен пӗрлешӗвне, Социалистла ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери союзне нумаях пулмасть ҫыру ярса панӑ.

Ҫырура уйрӑмах ҫамрӑксен прависене хӳтӗлес тӗлӗшпе ирттернӗ Пӗтӗм тӗнчери конференцин пӗлтерӗшне тата унӑн ӗҫӗсем ӑнӑҫлӑ пулнине кӑтартса панӑ. Конференци ҫамрӑк ӑрӑвӑн телейлӗ пурнӑҫ правине кӗрешсе илес ӗҫре ҫамрӑксене пӗрлешме чӗннӗ.

«Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ,—тенӗ малалла ҫырура,— Ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери виҫҫӗмӗш конгресне пухать. Конгресс 1953 ҫулхи июлӗн 25-мӗшӗнче уҫӑлать. Ҫавӑн пекех федераци Бухарестра Миршӗн тата туслӑхшӑн кӗрешекен ҫамрӑксемпе студентсен пӗтӗм тӗнчери 4-мӗш фестивальне пухать. Фестиваль 1953 ҫулхи августӑн 2—16-мӗшӗсенче пулать. Федераци ҫамрӑксен мӗнпур организацийӗсене тата мӗнпур ҫамрӑк ҫынсене конгреспа фестивале хатӗрленме тата вӗсен ӗҫне хутшӑнма чӗнет. Ҫак чӗнӳ ҫинчен пирӗн исполкомӑн 1953 ҫулхи майӑн 18—19-мӗшӗсенче пулса иртнӗ сессийӗнче тата тепӗр хут аса илтернӗ.

Ҫак туслӑх шухӑшӗпе хавхаланса тата ҫакӑн пек туслӑх ҫамрӑк ҫынсем ӑнланнӑ пек пулса пырассине курма хавхаланнипе, эпир сире хамӑрӑн тивӗҫлӗ организацисен представителӗсемпе тӗл пулма сӗнетпӗр. Ҫакӑн пек тӗл пуласси хамӑр пӗрле килӗшсе тунӑ йӗрке тӑрӑх пулмалла. Эпир ҫапла шутлатпӑр: ҫак тӗлпулу кучухнехи ҫамрӑксене хумхантарса тӑракан мӗнпур пурнӑҫлӑ ыйтусене сӳтсе явма, пирӗн организаци чӗнсе каланине йышӑнакан мӗнпур ҫамрӑк ҫынсене пӗр пекех пырса тивекен ыйтусене сӳтсе явма май парать. Эпир ҫапла шутлатпӑр: Венӑри конференци йышӑннӑ решенисем тӑрӑх ҫамрӑксен прависене хӳтӗлесси халех татса памалли ыйту пулса тӑрать. Пирӗн организацисен программине тата пирӗн членсем тӑрӑшнине шута илес пулсан, пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлени уйрӑмах ӑнӑҫлӑ пулма пултарать.

Эпир пӗр-пӗринпе тӗл пулни хӑйсен кун-ҫулне лайӑхлатма тӑрӑшакан мӗнпур ҫамрӑк ҫынсене хавхалантарнӑ пулӗччӗ. Пӗр-пӗринчен уйрӑлса тӑни вӑл ҫамрӑксен интересӗсене хирӗҫ пыракан ҫынсене кӑна усӑллӑ, вӑл ҫамрӑксен прависене кӗрешсе илес тата мире сыхласа хӑварас ӗҫе чӑрмантарса тӑма кӑна пултарать.

Пурнӑҫ ҫакна кӑтартать: дискуссисем ирттерме, пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлеме, пӗрлӗх туса хурассишӗн нихҫан та кӗрешме пӑрахман ҫынсем кӑна тӗрӗслӗх ҫулӗ ҫинче тӑраҫҫӗ. Пӗр-пӗринпе чӗререн килӗштерсе ӗҫлемелле тӑвасси ҫинчен ҫак сӗнӳсене ярса парса, Демократиллӗ ҫамрӑксен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ хӑйӗн ӗҫӗсем пӗтӗм ҫамрӑксен шухӑш-кӑмӑлне тивӗҫтерессе шанса тӑрать.

Китайри Коммунистсен партийӗн йышӗ ӳссе пырать

ПЕКИН, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). «Женьминьжибао» хаҫат Китайри Коммунистсен партийӗн йышӗ ӳссе пыни ҫинчен калакан материалсем пичетлесе кӑларнӑ. Пекинри муниципалитет предприятийӗсенчи парти организацийӗсен йышӗ иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан кӑҫал икӗ хута яхӑн ӳснӗ. Коммунистсен партине ӗҫ геройӗсем, производствӑра малта пыракансем кӗреҫҫӗ.

Иртнӗ ҫулхи июнь уйӑхӗнчен пуҫласа хальхи вӑхӑта ҫитиччен Чунцин хулинчи 49 заводра, фабрикӑсенче, шахтӑсенче парти ретне малта пыракан рабочисем, инженерсемпе техниксем 6.700 ҫын кӗнӗ.

Партие ҫӗнӗрен илнӗ юлташсем ӗҫре паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Ҫамрӑк коммунист, рабочи-строитель Куан Чун-чан производствӑна рационализацилессишӗн пыракан юхӑма пуҫараканӗ пулнӑ. Ҫак юхӑм ӗҫ тухӑҫлӑхне чылай ӳстерме пулӑшать. Партие нумаях пулмасть кӗнӗ инженер Хэ Хай-юань производство заданийӗсене ӑнӑҫлӑн тултарма пулӑшакан техникӑлла сӗнӳсем нумай панӑ.

И. В. Сталин Сочиненийӗсене Китай чӗлхипе пичетлесе кӑлараҫҫӗ

ПЕКИН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, кӑҫал октябрь уйӑхӗнче «Женьминьчубаньшэ» издательстви И. В. Сталин Сочиненийӗсен пӗрремӗш томне Китай чӗлхипе кӑларать.

И. В. Сталин произведенийӗсене Китай чӗлхипе куҫарса пичетлесе кӑларассине, Китайри коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, Китайри Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ ҫумӗнчи Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин произведенийӗсене куҫарас тӗлӗшпе ӗҫлекен Бюро туса пырать.

Венгрири Ӗҫҫыннисен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пленумӗ

БУДАПЕШТ, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Паян хаҫатсем июнӗн 27—28-мӗшӗсенче Венгрири Ӗҫҫыннисен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн анлӑ пленумӗ пулса иртни ҫинчен пӗлтернине пичетлесе кӑларнӑ. Пленум политикӑлла тата экономикӑлла лару-тӑру ҫинчен Матиас Ракоши тата Имре Надь тунӑ докладсене сӳтсе явнӑ, ку ыйту тӑрӑх тивӗҫлӗ решенисем йышӑннӑ.

Центральнӑй Комитет Политбюро йышне ҫӗнӗрен суйланӑ, унта ҫаксем кӗнӗ: Матиас Ракоши, Имре Надь, Эрне Гере, Андраш Хегедюш, Иштван Хидаш, Иштван Криштоф, Рудольф Фельдвари, Лайош Ач, Михай Жофинец. Политбюро членӗсен кандидачӗсем пулма Иштван Батана тата Бела Салаине суйланӑ.

Центральнӑй Комитет оргбюропа секретариата пӗтермелле тунӑ. Ҫавӑн пекех генеральнӑй секретарь должноҫӗ те пулмасть.

Секретариат членӗсем, ҫав вӑхӑтрах тата Центральнӑй Комитетӑн секретарӗсем пулма Матиас Ракоши, Лайош Ач, Бела Вег юлташсене суйланӑ.

Бирма представителӗ пӗлтерни

ПАРИЖ, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Бангкокран ҫапла пӗлтерет:

«Генерал Ли Ми ҫарӗсене (гоминдан ҫарӗсене.—Ред.) илсе тухмалла тӑвас тӗлӗшпе пухӑннӑ тӑватӑ ҫӗршыв канашлӑвӗнче Бирма делегацийӗн пуҫлӑхӗ полковник Аунг Гьи июнӗн 30-мӗшӗнче митингра ҫапла каланӑ: «Ли Ми ҫарӗсем Пӗрлешнӗ Нацисен резолюцийӗ тӑрӑх Бирмӑран тухса каймаҫҫӗ пулсан, Бирма ҫарӗсем вӗсене хирӗҫ пӗтӗмпе ҫӗмӗрсе тӑкиччен ҫапӑҫӗҫ». Вӑл ҫавӑн пекех: «Бирма правительстви хӑйӗн территорийӗнчен Коммунистла Китая хирӗҫ вӑрҫӑ вӑрҫмалли никӗс туса хурассипе килӗшес ҫук, тенӗ».

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ июнӗн 30-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ:

Иртнӗ кун хушшинче халӑх ҫарӗсем тӑшмана хирӗҫ Йоньхоньпе Хагамнеӗран хӗвеланӑҫ енчи районта тата Пенамдонран кӑнтӑр енче оборонӑра тӑрса ҫапӑҫнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтаксем паян тӑшманӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ, 2 самолетне сиенленӗ.

ПХЕНЬЯН, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнӑй командованийӗ июлӗн 1-мӗшӗнче ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче халӑх ҫарӗсем Кахориреӗ кӑнтӑр енчи тата Пенамдон районӗсенче тӑшмана хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫнӑ. Тӑшман икӗ полк чухлӗ вӑйпа, 20 самолет хӳтӗлесе тӑнипе, ҫичӗ хутчен хаярӑн атака тунӑ. Тӑшман атакисене пурне те сирсе пӑрахнӑ.

Паян халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тӑшманӑн 6 самолетне персе ӳкернӗ, 4 самолетне сиенленӗ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙӖН КОРЕЙӐРИ ТИСКЕРЛӖХӖ

ПХЕНЬЯН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Юлашки вунӑ кун хушшинче Ҫурҫӗр Корейӑри ялсем ҫине тапӑнасси вӑйланнӑ. Корейӑри тӗп телеграф агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, июнӗн 22-мӗшӗнче Америкӑн штурмовик-бомбардировщикӗсен ушкӑнӗ Ҫурҫӗр Пхенан провинцийӗнчи Сончон уесчӗ ҫине тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнипе хресченсен нумай ҫурчӗсене ишӗлтернӗ. Мирлӗ халӑх хушшинче вилнисем нумай.

Июнӗн 23-мӗшӗнче «вӗҫекен крепость» йышши темиҫе бомбардировщик Канвон провинцийӗнчи Аньбён уесӗнчи ялсем ҫине тапӑнса 150 ытла бомба пӑрахнӑ. Вилнисемпе аманнисем нумай.

Июнӗн 24-мӗшӗнче Америкӑн 15 штурмовикӗ Кӑнтӑр Пхенан провинцийӗнчи Кандон уесӗнчи ялсем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ.

Июнӗн 25-мӗшӗнче Америкӑн штурмовик-бомбардировщикӗсем Кӑнтӑр Хамген провинцийӗнчи Тичуо уесӗнчи ял ҫине тапӑнса бомбӑсем пӑрахнӑ, пулеметсенчен пенӗ. Ҫав кунхинех штурмовик-бомбардировщиксемпе «вӗҫекен крепость» йышши бомбардировщиксем Кӑнтӑр Хамген провинцийӗнчи Пукчхон, Оро уесӗсенчи ялсем ҫине тата Ким Чак хули ҫине хаяррӑн тапӑннӑ.

Июнӗн 26-мӗшӗнче Америка самолечӗсем Ҫурҫӗр Пхенан провинцийӗнчи Пхисен, Сончхон, Чхолсан уесӗсенчи ялсем ҫине бомбӑсем нумай пӑрахнӑ. Уйра ӗҫлекен хресченсем ҫине пулеметсенчен пенӗ. Хресчен ҫурчӗсене нумай ишӗлтерсе пӗтернӗ. Мирлӗ халӑх хушшинче, вӑл шутра ватӑ ҫынсем, хӗрарӑмсем, ачасем хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Июнӗн 27-мӗшӗнче «вӗҫекен крепоҫсен» пысӑк ушкӑнӗ Кӑнтӑр Пхенан провинцийӗнчи Йонган уесӗнчи ялсем ҫине 300 ытла бомба пӑрахнӑ. Мирлӗ халӑх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай.

Июнӗн 28-мӗшӗнче 12 «вӗҫекен крепость» Кӑнтӑр Пхенан провинцийӗнчи Кансо уесӗн районӗ ҫине хаяррӑн тапӑннӑ, 300 ытла бомба пӑрахнӑ.

Синьхуа агентстви пӗлтерни

ПЕКИН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран пӗлтернинче ҫапла каланӑ:

Ҫак кунсенче кӑна Ли Сын Ман, американецсем ирӗк панипе, Ҫурҫӗр Корейӑн тыткӑнри салтакӗсен пысӑк ушкӑнне вӑйпа тытса чарнӑ хыҫҫӑн, халӗ тыткӑна лекнӗ Китай халӑх добровольцӗсене вӑйпа тытса чарас пирки ҫӗнӗ плансем хатӗрлет. Американецсем ҫакӑн пек уҫҫӑнах ирӗк панипе усӑ курса, Ли Сын Ман тата ытларах иртӗхме пуҫланӑ. Ҫурҫӗр Корейӑн тыткӑнри салтакӗсене вӑрланипе ҫитмест, Чан Кай-ши ушкӑнӗпе пӗр шухӑшлӑ пулса, халӗ Ли Сын Ман Китай халӑх добровольцӗсене «ирӗке кӑларма», ҫакӑн хыҫҫӑн вара вӗсене вӑйпа Тайвань утравӗ ҫине кӑларса яма тӑрӑшать.

США ирӗк парса тата хавхалантарса тӑнипе усӑ курса, гоминдановецсемпе лисынмановецсем тыткӑнри ҫар ҫыннисене тытса чарас тӗлӗшпе тата тачӑрах ҫыхӑнса ӗҫлеме пуҫланӑ.

Ли Сын Ман тыткӑнри ҫар ҫыннисене вӑйпа тытса чарнӑ хыҫҫӑн Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫакнашкал провокацие чарса лартмалла тӑвас тӗлӗшпе нимӗн те туман. Лагерьсене Америка ҫарӗсем пӗтӗмпех хӑйсен контрольне илнӗ хыҫҫӑн та Ли Сын Ман лагерьсенчен ҫаплах тыткӑнри ҫар ҫыннисене вӑрлать. Пӗрлешӳллӗ Штатсем вӑрласа кайнӑ тыткӑнри ҫар ҫыннисене каялла таврса памалла тӑвас тӗлӗшпе Ли Сын Ман умне ыйту та тӑратман.

КОЧЖЕДО УТРАВӖ ҪИНЧЕ ТЫТКӐНРИ ИКӖ ҪАР ҪЫННИНЕ ВӖЛЕРНӖ

ЛОНДОН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Пусанран ҫапла пӗлтерет:

Тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсен командованийӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Ҫурҫӗр Корейӑн тыткӑнри икӗ ҫыннине вӗлернӗ, виҫӗ ҫынна амантнӑ.

Демократиллӗ Германи Республикинчи ӗҫҫыннисем правительство решенийӗсене ырлаҫҫӗ

БЕРЛИН, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Германи Республикин правительстви халӑх пурнӑҫне лайӑхлатас тата нимӗҫ халӑхӗн нациллӗ задачисене хӑвӑртрах татса памалла тӑвас тӗлӗшпе йышӑннӑ решенисене Демократиллӗ Германи Республикин халӑхӗ пысӑк хаваслӑхпа ырлать. Ҫакӑн ҫинчен хальхи вӑхӑтра республикӑра пулса иртекен ӗҫҫыннисен пухӑвӗсем лайӑх кӑтартса пара҆ҫҫӗ. Пухусем республика правительствине шанса тӑнине кӑтартакан демонстраци, политикӑлла ҫӗнӗ ҫул-йӗре пурнӑҫлассишӗн кӗрешме халӑх хатӗр тӑнине кӑтартакан демонстраци пулса тӑраҫҫӗ. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем, хӑйсен предприятийӗсенчи йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсене критиклеҫҫӗ, йӗркеллӗ ӗҫлеме кансӗрлесе тӑракан чӑрмавсене пӗтерме сӗнӳсем параҫҫӗ.

Шеневейде хулинчи чугун ҫул мастерскойӗсенче ӗҫлекенсен пухӑвӗ ҫитменлӗхсене критиклес тата Демократиллӗ Германи Республикин правительствине шанса тӑрас паллӑпа иртнӗ. Пухура министр Хвалек пулнӑ. Вӑл хальхи лару-тӑру ҫинчен тата Демократиллӗ Германи Республикин правительстви тытса пыракан политикӑлла ҫул-йӗр ҫинчен каласа панӑ.

Хаҫатсенче Штраусберг площадӗн районӗнче (Берлин) ҫӗр айӗнче ӗҫлекен рабочисем йышӑннӑ резолюцие пичетлесе кӑларнӑ. Унта вӗсем Демократиллӗ Германи Республикин правительствине шанса тӑни ҫинчен каланӑ.

Нимӗҫсен пӗрлӗхшӗн, миршӗн, ирӗклӗхшӗн кӗрешекен союзӗ чӗнсе калани

БЕРЛИН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви Дюссельдорфран пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсен пӗрлӗхшӗн, миршӗн, ирӗклӗхшӗн кӗрешекен союзӗ июнӗн 29-мӗшӗнче хӑйӗн информаци служби урлӑ Хӗвеланӑҫ Германири Бонн правительстви тытса пыракан политикӑна хирӗҫле мӗнпур партисене Аденауэр правительствине хирӗҫ анлӑн кӗрешме чӗнсе каланӑ.

Пирӗн халӑхӑн, тенӗ чӗнӳре, пӗр-пӗрне хирӗҫ вӑрҫӑ кӑлармалла мар, Германи пӗрлӗхне мирлӗ майпа туса хумалла. Аслӑ державӑсем каласса татӑлма пултарассинчен хӑраса ӳкнипе Аденауэр юлашки майпа усӑ курма тытӑнчӗ. Вӑл «икс планне» пурнӑҫа кӗртме пуҫларӗ. Анчах пирӗн телее пула ку ӗҫрен нимӗн те тухмарӗ. Тупӑсем калаҫасси пулмарӗ. Совет Союзӗн оккупаци ҫарӗсем хӑйсене питӗ сыхланулла тытрӗҫ, ҫапла вара хӑйсемшӗн мир паха пулнине тепӗр хут кӑтартса пачӗҫ. Ҫакӑн пек ӗҫсем тата тепӗр хут килсе тухма ан пултарччӑр тесен, бундестаг суйлавӗ вӑхӑтӗнче Аденауэра сирпӗтсе антарас пулать. Хальхи вӑхӑтра суйлав умӗнхи кӗрешӳре Аденауэра хирӗҫ тӑракансен пӗрлӗхлӗ пулса татӑклӑн кӗрешмелле. Вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ умӗнче ытти мӗнпур шухӑшсене пӑрахас пулать. Халӗ миршӗн тӑрӑшакансемшӗн пурин валли те пӗр лозунг пулмалла: Аденауэр правительстви тӗп пултӑр, мирлӗ килӗшӳ тӑвакан правительствӑшӑн!

Вальтер Ульбрихта „Ӗҫ Геройӗ" ятне панӑ

БЕРЛИН, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви Демократиллӗ Германи Республикин президент канцелярийӗ пӗлтернине парать. Унта ҫапла каланӑ: президент Вильгельм Пик Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗн председателӗн заместительне, Вальтер Ульбрихта, вӑл ҫуралнӑранпа 1953 ҫулхи июнӗн 30-мӗшӗнче 60 ҫул тултарнӑ ятпа, республикӑн мирлӗ хуҫалӑх строительствинче, мире сыхласа хӑварас, пӗрлӗхлӗ, демократиллӗ Германи туса хурас ӗҫре тава тивӗҫлӗ ӗҫсем тунӑшӑн «Ӗҫ Геройӗ» ятне памалла тунӑ.

Иозеф Вирта Нюрнбергра тухса калани

БЕРЛИН, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Нюрнбергра суйлав умӗнхи пуху пулнӑ. Пухӑва 2 пин ҫынна яхӑн пынӑ. «Нимӗҫсем пӗрлӗхшӗн, миршӗн, ирӗклӗхшӗн кӗрешекен союзӗн» председателӗ, рейхсканцлер пулнӑ доктор Иозеф Вирта тухса калани пухура пулнисем тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йышӑннӑ. Вирта союз программи ҫинчен пӗлтернӗ. Мир туса хума тата Германи халӑхӗ пӗр-пӗрне ӑнланмалла тума пӗтӗм нимӗҫсем пӗрлешсе ӗҫлени кирлӗ, тенӗ Вирта.

Вирта ҫавӑн пекех июнӗн 17-мӗшӗнче Берлинра тата Демократиллӗ Германи Республикинче фашистсем организациленӗ провокацие сивленӗ.

Италире ҫӗнӗ правительство туса хурасси ҫинчен пыракан калаҫусем

РИМ, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Итали республикин президенчӗ Эйнауди ҫӗнӗ правительство туса хурас тӗлӗшпе паян консультаци ирттерме тытӑннӑ. Вӑл депутатсен палатин председательне Гронки депутата, сенат председательне Мерцагора депутата, учредительнӑй пухусен председателӗсем пулнӑ Террачинипе Сарагата, коммунистсен партийӗн депутатсен палатипе сенатри ушкӑнӗсен председателӗсене Тольяттипе Скоччимаррона, христианла-демократла партин парламентри ушкӑнӗсен председателӗсене Моропа Ческине йышӑннӑ.

Чампино Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Эйнаудипе калаҫнӑ хыҫҫӑн, Тольятти журналистсене ҫапла пӗлтернӗ: «Ҫак кризиса татса пама, ман шутпа, ҫӑмӑлах пулмасть. Анчах та, демократие никам та пӑсас пулмасан, ҫак ыйтӑва татса пама, эпӗ шутланӑ тӑрӑх, ытлашши йывӑр мар. Ҫӗршывра халӑхран ыйтса пӗлнӗ ӗнтӗ. Вӑл кирлӗ результатсем пачӗ. Пӗрремӗш результат ҫакӑн пек—суйлав законне сирсе пӑрахнӑ, ӑна хатӗрленӗ ҫынсене сивленӗ. Ҫакна шута илес пулать. Иккӗмӗш результат—ку таранччен тытса пынӑ политикӑпа халӑхӑн пысӑк пайӗ килӗшменни курӑнчӗ. Ҫакна та шута илес пулать. Сасӑсен пысӑк пайӗ сулахай партисем енне куҫрӗ. Кӑна та шута илес пулать.

Ӗҫсем ҫакӑн пек килсе тухнине пурте демократла майпа шута илес пулсан, ҫак ыйтӑва татса пама йывӑр пулас ҫук. Унсӑрӑн эпир хальхи вӑхӑтра та, малашне те пысӑк йывӑрлӑхсем умне тухса тӑма пултаратпӑр».

Финляндири правительство кризисӗ пирки

ХЕЛЬСИНКИ, июнӗн 30-мӗшӗ. (ТАСС). Паян сеймри фракцисен представителӗсем республика президенчӗ Паасикиви патӗнче пулса правительство туса хурасси ҫинчен президентпа калаҫнӑ.

Финлянди халӑхӗн демократилле союзӗн фракци представителӗсем правительствӑна ҫак союзӑн тата аграрлӑ союзпа социал-демократла партин представителӗсене кӗртмелли ҫинчен каласа панӑ. Вӗсем ҫавӑн пекех тата кирлӗ пулсан сейм суйлавне срокчен ирттермелле тӑвассине те хирӗҫ мар, тенӗ.

Социал-демократла партин фракци представителӗсем сейма халех салатса ямалла, ҫӗнӗ суйлав ирттермелле тӑвассишӗн каланӑ. Ҫӗнӗ сейм пухӑччен вӗсем чиновниксен правительстви туса хума сӗннӗ.

Аграрлӑ союз фракцийӗн позицийӗ паллӑ мар-ха.

Совет музыканчӗсен Францири концерчӗсем

ПАРИЖ, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Июнӗн 29-мӗшӗнче «Франци—СССР» ассоциацийӗ чӗннипе Маргарита Лонг тата Жак Тибо ячӗпе пулса иртнӗ скрипачсемпе пианистсен пӗтӗм тӗнчери конкурсӗнче ҫӗнтернӗ совет музыканчӗсем Н. Школьникова тата Е. Малинин Бордо хулине тухса кайнӑ. Унта вӗсем ӗнер концерт ирттернӗ. Совет музыканчӗсен пысӑк ӑсталӑхӗ пӗтӗм халӑха тӗлӗнтернӗ. Театрта халӑх тулли пулнӑ.

Н. Школьникова тата Е. Малинин ячӗпе Бордо хулинчи муниципалитет совечӗ йышӑну туса ирттернӗ. «Франци—СССР» ассоциацийӗн вырӑнти организацийӗн руководителӗ йышӑнура тухса каланӑ чухне совет музыканчӗсем Франципе пулни вӑл «икӗ халӑх хушшинчи туслӑха тата вӗсем пӗр-пӗрне ӑнланнине» кӑтартать, тенӗ.

Паян совет музыканчӗсем Д. Ойстрах тата Л. Оборин «Франци—СССР» ассоциацийӗ чӗннипе Лилль хулине тухса кайнӑ, унта вӗсем концерт параҫҫӗ.

ПАРИЖ, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Парижра тухса тӑракан хаҫатсем совет музыканчӗсем—скрипач Д. Ойстрах тата пианист Л. Оборин Шайо двоколӗнче ирттернӗ концерт ҫинчен мухтаса ҫыраҫҫӗ. «Монд» хаҫат ҫапла ҫырать: «Давид Ойстрах хӑҫан та пулин пулнӑ скрипачсенчен чи чаплӑ скрипач. Вӑл тӗлӗнмелле ӑста выляť, инструмента питӗ чаплӑн вӗренсе ҫитнӗ. Уншӑн нимӗнле йывӑрлӑх та ҫук, вӑл ывӑнма пӗлмест. Тӗлӗнмелле ҫӑмӑл вылянипе вӑл пурне те хавхалантарать».

«Фигаро» хаҫат та Ойстрах пултарулӑхне пысӑк хак парать. «Совет скрипачӗ,—тесе ҫырать вӑл,—чаплӑ стильпе вылять. Вӑл пур енчен те тӗрӗс тата пурне те хумхантарса вылять».

«Юманите» хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, совет музыканчӗсен концерчӗ пуласиине Парижри музыка общественноҫӗ питӗ хавхаланса кӗтнӗ. Шайо двоколӗн залӗнче пӗр пушӑ вырӑн та юлман.

СОВЕТ БАСКЕТБОЛИСЧӖСЕН ҪӖНТЕРӲВӖ

БРЮССЕЛЬ, июлӗн 1-мӗшӗ. (ТАСС). Бельгие пырса ҫитнӗ совет баскетболисчӗсем июнӗн 30-мӗшӗнче каҫхине Гент хулинче Хӗвелтухӑҫ Фландрири командӑпа тӗл пулса выляннӑ.

Вӑйӑ совет баскетболисчӗсем 99:38 шутпа ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

Пысӑк метеоритсем



Тунгуска метеоричӗ тесе ят панӑ питӗ пысӑк метеорит ӳкнӗренпе кӑҫал 45 ҫул ҫитет.

Метеоритсем—тӗнче уҫлӑхӗнче куҫса ҫӳрекен хытӑ япаласем. Вӗсене ҫынсем тахҫан авалтанпах курнӑ. Анчах авалхи ҫынсем метеоритсем ҫинчен ӑнланнипе пӗлеймен, ҫавӑнпа вӗсенчен хӑранӑ, турӑ вырӑнне хунӑ е усал вӑй тесе шутланӑ.

Ҫӗр ҫине кашни ҫулах пинрен кая мар метеорит ӳкет, тесе шутлаҫҫӗ ученӑйсем. Ӳкнӗ метеоритсенчен нумайӑшне ҫынсем тупаймаҫҫӗ. Пысӑк метеоритсем ӳкни сайра хутра пулать. Ҫавӑн пек метеоритсене совет науки тимлӗн сӑнаса вӗренет. СССР Наукӑсен академийӗ ҫумӗнче метеоритсем тӗлӗшпе ӗҫлекен комитет пур.

Тунгуска метеоритне Октябрьти Социализмла Аслӑ революци пулнӑ хыҫҫӑн тин сӑнаса вӗренме тытӑннӑ. Метеорит ӳкнӗ вырӑна темиҫе экскурси кайса килнӗ. Унта, метеорит ӳкнӗ вырӑн тавра вуншар километртра, йывӑҫсем хуҫӑлса ӳкнӗ тата ҫунса хуралнӑ. Метеорит ӳкнӗ чухне кӗрлесе кайнӑ ҫил пырса лекмен айлӑмсенче йывӑҫсем чиперех лараҫҫӗ. Совет ученӑйӗсем сӑнаса пӗлнӗ тӑрӑх, Тунгуска метеоричӗ малтан темиҫе миллион тонна йывӑрӗш пулнӑ. Унӑн пӗчӗк пайӗ ҫеҫ ҫӗр ҫине ӳкнӗ. Метеорит ҫӗр ҫине ӳкнӗ чухне аслати авӑтнӑ пек вӑйлӑ сасӑ илтӗннӗ.

1947 ҫулта тата тепӗр пысӑк метеорит ӳкнӗ. Ӑна Сихотэ-Алинь метеоричӗ, теҫҫӗ. Вӑл атмосферӑра ҫурӑлса темиҫе пин пая ваклаңнӑ, унӑн вак пайӗсем ҫӗр ҫине ӳкнӗ (метеорит ҫӑмӑрӗ ҫунӑ). Сӑнаса пӑхнӑ чухне метеорит ӳкнӗ вырӑнта варинкке пек 112 шӑтӑк тупнӑ. Ҫав шӑтӑксенчен пиншер метеорит тата метеорит ванчӑкӗсем чавса кӑларнӑ. Вӗсенчен чи пысӑкки 1.745 килограмм, чи пӗчӗкки—0,18 грамм тайнӑ. Ку вӑл ҫӗр ҫинче тупнӑ чи пӗчӗк тимӗр метеорит. Совет ученӑйӗсем шутласа кӑларнӑ тӑрӑх, Сихотэ-Алинь метеоричӗн йывӑрӑшӗ малтан 1.500—2.000 тонна пулнӑ, ҫӗр ҫине 100 тонна яхӑн ҫитнӗ.

Пысӑк метеоритсем ӳкнӗ чухне таврана ҫапҫутӑ ҫутатса янӑ, хӑватлӑ сасӑ кӗрлесе тӑнӑ.

Совет ученӑйӗсем метеоритсене сӑнаса вӗренеҫҫӗ, метеоритсем ӳкнӗ вырӑнта пухнӑ материалсене пӗтӗҫтереҫҫӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: СССР Наукӑсен академийӗн метеоритсем тӗлӗшпе ӗҫлекен комитечӗн председателӗ академик В. Г. Фесенков Сихотэ-Алинь метеоричӗн катӑкӗсене пӑхать.

В. ШАРОВСКИЙ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Республикӑра мала тухассишӗн

Июнӗн 30-мӗшӗнче Шупашкарта тата Ҫӗмӗрлере футбол вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн пыракан ӑмӑртӑвӑн черетлӗ вӑййисем пулса иртрӗҫ.

Шупашкарти «Энергия» («Молния») спорт обществин стадионӗнче Чапаевски поселокри футбол команди Улатӑрти футбол командипе вылярӗ. Вӑйӑра Чапаевски поселок команди 1:0 шутпа ҫӗнтерчӗ.

Ҫав кунах Ҫӗмӗрлере вырӑнти «Красная звезда» спорт обществин футболисчӗсем Шупашкарти динамовецсемпе тӗл пулса выляннӑ. Вӑйӑ 2 : 1 шутпа «Красная звезда» спортсменӗсем ҫӗнтернипе вӗҫленнӗ.

ПАЯН «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАҪАТРА

Марксизм-ленинизмӑн творчествӑлла вӑйӗ («Правда» хаҫатӑн июлӗн 2-мӗшӗнчи умстатьи).

И. Шорников.—Сменӑри нормӑна тултарасси—кашни механизаторӑн тивӗҫӗ.

Колхозсемпе МТС-сем тырпул пухса кӗртме хатӗрленни ҫинчен районсенчен килнӗ хыпарсем.

Н. Кондаков.—Юман ҫулҫи ҫисе пурӑнакан пурҫӑн хуртчӗсене ӑнӑҫлӑ ӳстерер.

Шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрлесси ҫинчен.

Вырӑнти тата урӑх ҫӗршывсенчен килнӗ хыпарсем.

Редактор заместителӗ М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР
ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ—Кизел хулинчи драма театрӗн гастролӗсем. Июлӗн 3-мӗшӗнче «Ночной звонок» (4 пайлӑ комеди). Спектакль 20 сехет те 30 минутра пуҫланать.

КИНО
«РОДИНА»—июнӗн 3-мӗшӗнче 12 тата 14 сехетре пуҫланакан сеанссенче «Павлинка», ытти сеанссенче — «Джамбул». Сеанссем 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-04, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01162 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.